24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮНЬ
27
ЭРНЕКУН
149 (5864) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, тăшмана çапса аркататпăрах

Совет Союзĕн пĕтĕм чикки тăрăх, Шурă тинĕс патĕнчен Хура тинĕс таран, хăйĕн обязательствисене улталăн цăсна тата совет çĕрĕ çине тапăнса кĕнĕ ирсĕр те усал тăшмана хирĕç вăйлă, хаяр çапăçу пырать. Пирĕн чикĕре тăшман питех те пысăк вăйсем пухса тăратнă, хăйĕн мĕн хушнине итлекен тарçисене—румын боярĕсемпе финн белогвардеецĕсене мобилизациленĕ.

Фашистла захватчиксем совет халăхĕ çине кĕтмен çĕртен килсе тапăнас. шăн, ăна кĕтмен çĕртен, çиçĕм пек хăвăрт çапса хуçасшăн пулнă. Вĕсем йăнăшрĕç. Совет халăхĕ, пĕр çын пек пулса, хăйĕн юратнă тăван çĕршывне хӳтĕлеме çĕкленсе тăчĕ. Хĕрлĕ Çар тăшман килсе çапнине хирĕç тавăрса çапнипе ответ пачĕ. Фронтран кĕскен, анчах лайăх ăнланмалла каласа параканСовет сводкисем çакна ĕнентерӳллĕн кăтартса парасçĕ: пирĕн артиллери тăшмана мĕн тери тĕл персе çĕмĕрни çинчен, пирĕн сталинла соколсем—совет летчикĕсем, пирĕн тимĕр пек çирĕп пехота, пирĕн танкистсем мĕн тери пысăк хăюллăхпа тата паттăрлăхпа çапăçни çинчен ĕнентерӳллĕн каласа парасçĕ.

Çакă вăл пуçламĕшĕ кăна-ха. Совет Союзĕ вĕçĕ-хĕррисĕр хăватлă вăйпа пырса çапнине ирсĕр тăшман малалла курĕ, мĕншĕн тесен çак кĕрешĕве хăйĕн чаплă тăван çĕршывне çулăмлă туйăмпа хĕрӳллĕн юратакан нумай миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленсе тăчĕ. Тăшман совет халăхĕн хаяр çиллин пурне те çĕмĕрсе тăкакан хăрушă вăйне курса пĕлĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем — вăрçă вучĕ чĕртекен асса кайнă фашистла ирсĕрсене хирĕçле хаяр, никам пĕтерме пултарайман курайманлăхпа хавхаланса çĕкленнĕ боецсем фронтра çапăçасçĕ. Хăйсем çĕнтерессине вĕсем нимĕн иккĕленми çирĕппĕн шанса тăрасçĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çакна лайăх пĕлесçĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пĕлнĕ пекех, лайăх пĕлесçĕ: пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, пирĕн вăрçă—тĕрĕслĕхшĕн пыракан вăрçă, хамăрăн тăван çĕршывшăн, хамăрăн чыслăхшăн тата ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă.

Совет халăхĕ вăрçă пуçласшăн пулман. Вăл хăйĕн обязательствисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пычĕ, вăл хăйĕн мирлĕ политикине çине тăрса, питех те пысăк чăтăмлăхпа хӳтлесе пычĕ. Пире çак вăрçа фашистсем илсе кĕчĕç. Вĕсем пирĕн çине тапăнчĕç. Эпир отпор паратпăр. Вĕсем тапăннине хирĕç совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçăпа ответ пачĕ, çак вăрçă тăшмана аркатса тăкиччен те, ăна пĕтерсе тăкиччен те пĕтес çук.

Тăшмансем пирĕн çĕр çине пирвайхи хут мар тапăнса кĕреççĕ. Вырăс халăхĕн историйĕ ӳçĕн кăтартса парать: хăрушлăх минуттисенче пирĕн тăван çĕршыв ывăлĕсен аслă хăвачĕпе никам сĕмĕрейми паттăрлăхĕ уйрăмах пысăк вăйпа палăрать. Пирĕн ирĕклĕхе юратакан хăюллă та паттăр халăхăн çирĕплĕхне захватчиксем çĕмĕрме пултарнине истори те курман. Германи фашисчĕсем историе маннă пулсан, эпир вĕсене ун çинчен аса илтерĕпĕр. Аса илтерĕпĕр вĕсен мăнаслашшĕсене—ливон «йытти-рыцарĕсене» мĕнле хаярăн çĕмĕрсе тăкни çинчен. Эпир аса илтерĕпĕр, тин кăна çуралса аталаннă çамрăк совет республики çине пуçран тытăнса ура тупанĕ таран хĕçпăталланнă Германи империализмĕ пуринчен малтан килсе тапăнчĕ. Эпир аса илтерĕпĕр, шăпах çавăн чухне ĕнтĕ «Нарвăпа Псков патĕнче нимĕç оккупанчĕсене татăклă отпор панă. Вĕсене Петроград çинелле куçса килме чарса лартнă. Германи империализмĕн войскисене отпор панă кун—февралĕн 23-мĕш—çамрăк Хĕрлĕ Çар çуралнă кун пулса тăнă» («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ»).

Çамрăк Хĕрлĕ Çар пуçран тытăнса ура тупанĕ таран хĕçпăталланнă Германи войскисене отпор пама пултарнă, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешнĕ. Хăйĕнчен вăйлăрах тăшмана хирĕç пынă çапăçу испытанийĕнчен вăл чыслăн çĕнтерсе тухнă. Хальхи вăхăтра тăшманăн пысăкрах вăйĕ çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Совет держави Германи фашизмне хирĕç çавтери тĕреклĕ çар, çавтери хăватлă вăй кăларса тăратма пултарать, çак вăй фашистла ордасене кĕл туса вĕçтерĕ, нимĕн хăварми пĕтерсе тăкĕ.

Эпир пĕлетпĕр тата пĕр самантлăха та манмастпăр: тăшман вăйлă, вăл пирĕн çине килсе çапма хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухнă, хăйĕн мĕнпур ресурсĕсене мобилизациленĕ. Çапăçу йывăр пулать. Малта — нумай испытанисем, нумай йывăрлăхсем, нумай жертвăсем. Анчах эпир мĕнпур испытанисене хăюллăн кĕретпĕр, мĕншĕн тесен эпир тĕрĕс ĕçе хӳтлетпĕр. Пирĕн енче Германи фашизмĕн хĕçпăталлă вăйĕнчен пĕчĕккĕ мар, тата унтан нумай пысăкрах хĕçпăталлă вăй кăна мар, пирĕн енче—Гитлер пусмăрласа илнĕ мĕнпур халăхсен кăмăлĕпе юратăвĕ, малта пыракан мĕнпур этемлĕхĕн кăмăлĕпе юратăвĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн вăрçă пусмăрти халăхсене нацияллĕ ирĕклĕх кӳрет, наци енĕпе çĕнĕрен чĕрĕлсе тăмалли условисем кӳрет.

Европăри чылай çĕршывсем фашистла хаяр пурнăçăсен ури айĕнче асапланаççĕ. Германи фашизмĕ пĕчĕк халăхсене, фашистсем «низший раса» шутне кĕртекен мĕнпур халăхсене пĕр хĕрхенӳсĕр террорпа асаплантармалли, намăса пĕлмесĕр çаратмалли, этем курман пек хаярăн пусмăрламалли, физически пĕтермелли тискер кайăкла режим туса хучĕ. Çак режима Гитлер пусмăрти халăхсенчен мăшкăлласа, Европăри «çĕнĕ йĕрке» тесе калать.

Уçăн персе ярас кăмăл килсе тухнă чухне Гитлер çакăн çинчен пĕр хут çеç мар каланă: манăн тĕллев Германире хăйĕнче власса тăракан ушкăн туса йĕркелесси, пĕтĕм çĕршыва тата Европăри пĕтĕм халăхсене, унтан вара пĕтĕм тĕнчене çав ушкăна пăхăнтарасси пулса тăрать, тенĕ. Гитлер пĕр хут çеç мар çапла каланă: эпĕ халăхсен хушшинчи пĕр танлăха йышăнмастăп, мĕнпур халăхсем Германи фашизмне—«тĕнче валли господасен çĕнĕ класне пама çуралса тухнă» фашизма пăхăнса тăмалла, тенĕ.

Мĕн каласси пур, программа уçăнах курăнса тăрать: Германи халăхне господасемпе чурасем çине уйăрмалла, мĕнпур халăхсенчен Германи фашизмĕн пурне те итлекен чуриссем туса хурса, вĕсене фашистла господасене пăхăнтармалла. Çак программăна Гитлер Европăра киревсĕр «çĕнĕ йĕрке» туниле пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл Голландине, Бельгине, Данине, Норвегине, Франçине тустарса çаратать, вăл Германи войскисем оккупациленĕ мĕнпур çĕршывсенче фашистла терроран драконла законĕсене туса хурать, вăл чех, поляк, серб, грек халăхĕсене физически пĕтерсе пырать. «Çĕнĕ йĕрке» çумне пĕрлешнĕ ăссăр правительсем тăрăшнипе Германи фашизмĕн çаварне кĕрсе ӳкнĕ халăхсенчен Гитлер хăйĕн вассалĕсем, хăйĕн мĕн хушнине итлекен чурисем туса хурать. Муссолини ăна валли рабочи вăй мобилизацилет, генерал Антонеску ăна валли тупă ашĕ тăратать, белофинла правительсем ăна валли ССР Союзне хирĕç вăрçмалли плацдарм тума территори парасçĕ. Çак государствăсенче пуринче те, Германири пекех, Германи фашизмĕ оккупациленĕ çĕршывсенчи пекех, вĕçĕ-хĕррисĕр чухăнлăх, хаяр террор пуçпулса тăрать.

Халĕ ĕнтĕ Гитлер хăйĕн çăткăн аллисене совет çĕрĕ патнелле тăсрĕ. Вăл хăйĕн йыткĕтĕвĕсене пирĕн чикĕсем çине кăларса ячĕ. Унăн сĕмсĕр пуçне совет çĕрĕн пуянлăхĕсем канăç памаççĕ. Совет ресурсĕсен шучĕпе, миллионшар совет çыннисем тăрăшса тунă пуянлăх шучĕпе вăл хăйĕн пĕтсе çитнĕ запасĕсене ӳстересшĕн. Вăл пирĕн колхозниксен çĕрне туртса илесшĕн, вăл пирĕн хуласене çĕмĕрсе пĕтересшĕн, пирĕн фабрикăсемпе заводсене çавăрса илесшĕн.

Çакă вăл нихăçан та пулас çук! Тăван çĕршыва юратни совет çыннисен чĕрисенчи таса курайманлăха чĕртсе ячĕ. Ирĕнтерекен ирсĕр фашистла çĕлен-калтана таптаса лапчăтачченех, çак курайманлăх тăшмана çунтарса кĕл тăвакан хаяр çулăмпа хĕмленсе тăрĕ. Нихăçанхинчен те тачăрах пĕтĕçнĕ, юратнă большевикла парти тавра, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тавра пĕрлешнĕ совет халăхĕ, хăйĕн тăван çĕршывне кăкăрпа хӳтлесе хăварас тесе, ирсĕр тăшмана таптаса лапчăтас, пĕтерсе тăкас тесе, хăйĕн вăй-халне вуншар хут, çĕршер хут ӳстерĕ.

Совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçа çĕкленсе тăчĕ. Пирĕн ялавсем çине çакăн пек сăмахсем çырса хунă: Тăван çĕршывшăн, чыслăхшăн, ирĕклĕхшĕн, Сталиншăн! Çак ялава йăтса пырса, эпир çĕнтеретпĕрех, мĕншĕн тесен пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç!

(«ПРАВДА» умстатьи, июнĕн 26-мĕш.).

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Иранăн ГССР Союзĕнчи посолĕ г. Мохамед Саед хăйĕн кăçалхи июнĕн 26-мĕшĕнче панă вербальнăй нотинче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне çакăн çинчен пĕлтернĕ:

«Хăйĕн Правительстви хушнипе Иран посольстви Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне çакăн çинчен пĕлтерет: Германипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ хушшинчи вăрçăна пула тухса тăнă положение кура, Иран Правительстви пĕтĕмĕшпех нейтралитет тытса пырать».

Совет информаци бюровĕ пĕлтерни

Июнĕн 25-мĕшĕнче противникăн подвижной чаçĕсем Вильнопа Барановичи енĕсенче наступлени сарса пынă.

Иртнĕ кун хушшинче çак енсенче совет авиацийĕн пысăк соединенийĕсем противник танкĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешнĕ. Çапăçу пынă вăхăтра противникăн танклă уйрăм групписене Вильно, Ошмяны районĕсене пырса кĕме май килнĕ.

Пирĕн çĕр çинчи войскăсем вăйлăн хирĕç тăнипе тата активлă ĕçсем сарса янипе çав енсенче противникăн пехотăллă соединенийĕсене унăн танклă чаçĕсенчен уйăрса илнĕ.

Бродскпа Львов еннелле çĕмĕрсе каçма хăтланакан противнике хирĕç Хĕрлĕ Çарăн контратакăсем тăвакан войскисем вăйлăн çапăçаççĕ, вĕсене пирĕн авиацин хăватлă атакисем пулăшса пыраççĕ. Çапăçусенче противникăн механизированнăй соединенийĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ. Кунта халĕ те çапăçу пырать.

Вăйлă контратака туса, пирĕн войскăсем Перемышле çĕнĕрен хăйсен аллине савăрса илнĕ.

Черновицы енче пирĕн войскăсем Прут юханшывĕ урлă каçма хăтланнă противникăн пысăк атакисене сирсе янă.

Фронтăн Бессарабири участокĕнче Хĕрлĕ Çар войскисем Прут юханшывĕн хĕвелтухăç сыранĕ çинчи позицисене çирĕппĕн тытса тăраççĕ, противник юханшыв урлă каçма хăтланса тăвакан нумай атакăсене ăнăçлăн сире-сире ярааççĕ. Скулени районĕнче противник наступлени тума хăтланнă вăхăтра ăна чылаях пысăк пораженисем кӳнĕ, унăн юлашкисене Прут юханшывĕ хыçне хăваласа ярааççĕ. Нимĕçсемпе румынсене тытăна илнĕ.

Пирĕн авиаци нимĕçсен Финляндири аэродромĕсем çине чылай хутчен çĕмĕрсе тăкмаллах вăйлăн пыра-пыра тапăннă, Мемель çине, противникăн Либава патĕнчен çурçĕр енчи карапĕсем çине тата Константца порчĕн нефтегородокĕ çине бомбăсем кайса пăрахнă.

Июнĕн 25-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе противникăн 76 самолетне персе антарнă, пирĕн 17 самолет хăйсен базисене тавăрăнман.

* * *

Нимĕç летчикĕ, унăн самолетне Совет Союзĕпе Финлянди чиккинче пирĕн авиаци персе антарнă хыççăн тытăкăна илнĕскер, çапла каланă: «Эпир вырăссене хирĕç вăрçастăн мар, ирĕксĕрленипе çапăçатпăр, вăрçă йăлăхтарса çитерчĕ, хамăр мĕншĕн çапăçнине пĕлместпĕр».

* * *

Фронтăн пĕр участокĕнче çапăçăва кĕнĕ нимĕç войскисем ӳсĕр пулнă, çапăçура вĕсен нумай çын вилсе тата аманса пĕтнĕ. Тытăкăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем çапла пĕлтернĕ: «Шăпах çапăçу пуçланас умĕн пире эрех ĕçтереççĕ».

* * *

Н-ски чаçри çамрăк боец-зенитчиксем çапăçусен пĕрремĕш кунĕнче хăюллăнах пемен пулнă. Тепĕр кунне çак боецсем хăюллăн ĕçлеме пуçланă, тĕл пенĕ тата пĕр кун хушшинче Германин 9 бомбардировщикне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиацин Н-ски чаçĕнчи летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче противникăн 10 самолетне персе антарнă. Полк командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ майор Коробков противникăн икĕ бомбардировщикне персе антарнă, радист-стрелок Шишкович боевой задачăна пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра противникăн «Мессершмитт» йышши икĕ самолетне персе антарнă. Боевой задачăна пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра командир Сорокин ертсе пыракан 9 самолет çине противникăн 15 самолечĕ пырса тапăннă, çапăçура вăл 6 самолет персе антарнă, 4 самолет çухатнă. Икĕ уринчен те амантнă майор Ячменев госпитале кайма килĕшмен, боевой задачăсене малаллах пурнăçа кĕртсе пынă.

Н-ски авиачăçĕн (Станислав районĕ) летчикĕсем противникăн 19 самолетне персе антарнă, кĕçĕн командирсен Ковалевпа Милаховăн зенитнăй артиллери расчечĕсем икĕ самолет персе антарнă. Çак расчетсен боецĕсем нимĕçсен 4 летчикне тытăкана илнĕ. Пурĕ нимĕçсен 12 летчикне тытăкана илнĕ.

* * *

Н-ски авиаполкри летчиксем геройла çапăçнă. Авиаполк хăйĕнне пĕр самолет çухатса, противникăн 13 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Н-ски стрелковăй полкри красноармеец Романов, тăшман разведчикĕ-мотоциклистчĕ патне йăпшăнса пырса, ăна пĕтерсе тăкнă. Çак полкрах подразделени командирĕ кĕçĕн лейтенант Мезуев, хăй виçĕ хут аманнă пулсан та, çапăçу хирĕнчен тухса кайман, малалла çапăçма пăрахман.

* * *

Н-ски çар соединенийĕн строительнăй батальонĕнчи шофер çĕмĕрлĕ самолет çинчен сиксе аннă тата тарса пытанма хăтланнă 4 нимĕç летчикне тытса чарнă.

* * *

Пулеметнăй ротăсенчен пĕрин командирĕ, противник хупăрласа илнĕ вырăнта 8 сехет тытла ирттернĕскер, противнике хирĕç пĕр чарăнса тăмасăр çапăçнă, хăйне хупăрласа пыракан группăсене хăвала-хăвала янă, хăйпе доксем хушшинчи сыхăнăва темиçе хутчен çĕнĕрен йĕркеле-йĕркеле янă. Противникăн йышĕ пысăкрах пулнă пулсан та, пулеметнăй ротăн командирĕ подкреплени пырса çитиччен позицине алăран вĕçертмен.

* * *

Кĕçĕн сержант Трофимов—оруди командирĕ, орудине противник хупăрласа илнĕ тата орудин боевой расчечĕ стройран тухнă обстановкăра, хăйĕн орудийĕн аманнă виçĕ боецне хӳтлĕхлĕ вырăна леçсе янă, çакăн хыççăн противнике тӳрех тĕллесе персе çĕмĕре-çĕмĕре тăнă. Противнике хирĕç кĕрешни усăсăр пулса çитсен (противник танкĕсем персе тăмалли позици патнеллех пырса çитсен), Трофимов орудине взрыв туса çĕмĕрнĕ, хăй вара тăшмансем хупăрласа илнĕ вырăнтан пысăк ăсталăхпа çĕлăнса тухнă.

* * *

Н-ски батальонăн командирĕ капитан Кошель çапăçу вăхăтĕнче пулеметсенчен персе тăрас системăна питех те лайăх пĕлсе организациленĕ. Вăл пĕр хумханмасăр противнике хăйсем патне çывăха пыма май панă, çакăн хыççăн вара ун çине пулеметсенчен неме пуçланă. Тăшманăн икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тăшман парашютисчĕ-диверсанчĕсене шыраса тупса тытас ĕçре хресченсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсене активлă пулăшу пани çинчен калакан фактсем нумай. Сăмахран, Херц районĕнче самолет çинчен антарса хăварнă виçĕ парашютист-диверсанта хресченсем тытнă та çар чаçне илсе пынă.

В. М. Молотов юлташ сăмахне уйрăм брошюра туса кăлараççĕ

Государствăн политикăллă литература издательстви ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха уйрăм брошюра туса кăларать.

Çавăн пекех тата совет халăхĕн фашистла варварсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçи çинчен лозунгсем кăлараççĕ. Тиражăн пĕр пайне пичетлесе кăларнă çинтĕ.

«Правда» издательстви Ем. Ярославский çырнă «Великая отечественная война советского народа» ятлă брошюрăна пичетлесе кăларнă.

(ТАСС).

Профсоюзпа комсомол кросĕ

Профсоюзпа комсомол кросĕ республикăра пысăк хастарлăхпа иртсе пырать.

Республикăри штабран илнĕ тулли-мар сведеннисем тăрăх, кроса пĕтĕмпе 37.580 çын хутшăннă, вĕсенчен комсомолецсем 20.482 çын.

Октябрьски районра малтанхи 5 кун хушшинче 3.331 çын ăмăртăва хутшăннă, вăл шутра 1.109 комсомолец.

Кросс Шупашкар районĕнче те аван иртет. Кунта 3.020 çын хутшăннă, ГТО нормине 1.868 çын панă. Елчĕк, Çĕмĕрле, Сĕнтĕр районĕсем те паха тĕслăхсем кăтартаççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕкчи военнослужащисен çемьисене пособисем памалли тата тӳлемелли йĕркене çинчен

Вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне, НКВД-ăн чикĕри тата шалти войскисене мобилизаци йĕркипе илнĕ рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен çемьисем, сверхсрочнăй службăра тăраканнисен çемьисемсĕр пуçне, государствăран пособисем çак йĕркепе илеççĕ:

1. Çемьере ĕçлеме пултаракан çынсем çук пулсан, хулара кашни уйăхра çакăн чухлĕ пособи тӳлеççĕ: а) ĕçлеме пултарайман пĕр çын пулсан — 100 тенкĕ, б) ĕçлеме пултарайманнисем икĕ çын пулсан — 150 тенкĕ, в) ĕçлеме пултарайманнисем виçĕ çын тата ытларах та пулсан — 200 тенкĕ, ялта вырăнсенче — çак суммăсенчен 50 процентне тӳлеççĕ.

2. Çемьере ĕçлеме пултарайман çынсем виççĕ тата ытларах пулсан, ĕçлеме пултаракан пĕр çын пулсан, уйăхне — хулара 150 тенкĕ, ялта вырăнсенче — çак суммăран 50 процент чухлĕ пособи тӳлеççĕ.

3. Çемьере 16 çула çитмен ачасем иккĕ пулсан, ĕçлеме пултараканни пĕр çын пур пулсан, уйăхне — хулара 100 тенкĕ, ялта вырăнсенче — çак суммăран 50 процент чухлĕ пособи тӳлеççĕ.

4. Пособине военнослужащи çемьи пурăнакан вырăнта ĕççыннин депутачĕсен районри (хулари) Совечĕн исполкомĕ çумĕнчи комисси памалла тăвать; комисси çак составпа пулать:

Комисси председателĕ — районри (хулари) исполком председателĕн заместителĕ;

Комисси членĕсем:

1) районри (хулари) çар комиссарĕ,

2) районри (хулари) социальнăй обеспечени отделĕн заведующийĕ.

5. Пособи памалла тăвас ыйтусене военнослужащисен хулара пурăнакан çемьисенчен заявлени илнĕ хыççăн, военнослужащисен ялта вырăнсенче пурăнакан çемьисем тĕлĕшпе ялсовечĕсенчен списоксем илнĕ хыççăн виçĕ кунлă срокра татса параççĕ.

6. Военнослужащи çемьине пособи памалла тăвас ыйтăва татса панă чухне военнослужащи иждивенинче тăнă ĕçлеме пултарайман çынсем тесе çаксене шутлаççĕ:

а) 16 çула çитмен ачасене, вĕренекенсене — 18 çула çитменнисене;

б) 16 çула çитмен шăлнĕсемпе йăмăкĕсене, вĕсем вĕренеççĕ пулсан — 18 çула çитменнисене, вĕсен ĕçлеме пултаракан ашшĕ-амăшĕ çук пулсан;

в) ашшĕ 60 çултан иртнĕ, амăшĕ 55 çултан иртнĕ пулсан;

г) арăмĕ тата ашшĕ-амăшĕ пĕрремĕш тата иккĕмĕш группăри инвалидсем пулсан, вĕсем миçе çултине пăхмас пах, ĕçлеме пултарайман çынсем те шутланаççĕ.

I-мĕш асăрхаттарни: çак статья кăтартнă çынсене военнослужащи иждивенинче тăракансем тесе вĕсем яланах военнослужащи п лăшса тăнипе пурăннă пулсан шу лаççĕ.

II-мĕш асăрхаттарни: военнослужащи çемьин членĕсем, ун çемьинчен урăх вырăнта (хулар (районра) уйрăмăн пурăнаççĕ пулс вĕсен çемьине памалла тунă по бин пĕтĕм сумминчен хăйсене вĕçлĕ пайне илеççĕ.

7. Мобилизациленĕ рабочисемпе служащисен çемьисене, вĕсене хăйсем лесе тăнă вырăнта татăклăн расп панă куntан пуçласа, колхозник тата мобилизациленĕ ытти çын çемьисене — призыв кунĕнчен пуç са, мобилизаци вăхăтĕнче действите нăй çар службинче тăракан воен служащисен çемьисене — мобилиза çинчен пĕлтернĕ вăхăтран пуçласа собине памалала тăваççĕ.

8. Пособи памалла тăвакан комис йышăннă решени пирки облас (крайри) исполнительнăй комитета та облаççем çине пайланман респу ликăра — республика Совнарком жалоба пама пулать, вĕсем решени виçĕ кунлă срокра йышăнаççĕ тата сен решенийĕ татăклă пулать.

9. Военнослужащине инвалида тух пирки çар службинчен киле янă п сан, унăн çемьине памалла тунă собине инвалидность тăрăх пенси малла тăвиччен тӳлесе тăраççĕ.

Вăрçăра вĕлернĕ, вилнĕ е пĕр хып сăр çухалнă военнослужащисен çем сем хăйсене памалла тунă пособ вĕсене пенси памалла тăвиччен и тăраççĕ.

10. Пособи илме право çук воен служащи çемьи составĕнче мала улшăну пулас пулсан (çемьери ы членсене мобилизацилени, семьере леме пултарайман çĕнĕ член пу тăни т. ыт. те), çакăн пирки ç пособи илме право илет пулсан, в çак çемьене çак Указпа пăхса х йĕрке тăрăх, улшăну пулса иртнĕ хăтран пуçласа пособи памалла ваççĕ.

Пособи илсе тăракан военнослужа çемьин составĕнче малалла пособи се тăрас правăна çухатакан улш пулса тăрсан (çемьери çул çит членсен çулĕ çитни, çемьере ĕçл пултаракан çĕнĕ член пулса тăн ыт. те), вара çак çемье, унăн сос вĕнче улшăну пулнă вăхăтран пуç са, пособи илес правăна çухатать.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти июнĕн 26-мĕш.

Вăрçă фрончĕсенче

Англипе Германи хушшинчи фронтра. Июнĕн 24-мĕшĕнче тата ыран июнĕн 25-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ пысăк активлăхпа кĕрешнĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кельн, Дюссельдорф тата Кильри тинĕс-çар бази çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ нимĕçсен оккупациленĕ Çурçĕр Франци çине пырса тапăннă. Калепе Булонь çине уйрăмах нумай бомбăсем пăрахнă. Лилль çывăхĕнче сывлăшри çапăçура Англи истребителĕсем Германин 9 самолетне персе антарнă. Юлашки 9 кун хушшинче Англи авиацийĕ Германин «Мессершмитт» йышши çĕнĕ истребителĕсене 121 машина пĕтерсе тăкнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ыран июнĕн 25-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕн ĕçĕсем пысăках пулман. Мерсей юханшывĕн айлăмĕнчи тата ытти хăмпĕр районсенчи пунктсем çине кăштах бомбăсем пырса пăрахнă. Германире пĕлтернĕ тăрăх, Германи самолечĕсем Ливерпуль порчĕн территорийĕнчи сооруженисем, Тайппа Тис юханшывĕсем тинĕсе юхса тухнă вырăнти портсен сооруженийĕсем, çавăн пекех тата Кăнтăрвелтухăç Англири аэродромсем çи бомбăсем пырса пăрахнă. Германи пĕлтернĕ тăрăх, Англин Сирире кĕреçĕр çинчи войскисене, Англирен пĕлтернĕ тăрăх, Англин Вăтаçĕр тинĕсчи флочĕпе авиацийĕ пысăк пулă параççĕ, французсен çар объекчĕсене пĕр çĕре пухăннă войскисем т аэродромĕсем çине персе тăраççĕ, б бăсем пырса пăрахаççĕ. Швейцари «Газетт де Лозанн» хаçат шутланă рăх, Франци войскисен положени йывăрланса çитнĕ.

Июнĕн 25-мĕш. (ТАСС).

Совет Союзĕн Шанхайри граждăнĕсем М. И. Калинин юлташ патне янă телеграмма

Июнĕн 24-мĕшĕнче М. И. Калинин юлташ ячĕпе çакăн пек телеграмма килнĕ:

МУСКАВ. КАЛИНИНА

Совет Союзĕн Шанхайри граждăнĕсем, нимĕç фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршывăн чиккисем çине ултавлăн пырса тапăннăн çинчен пĕлнĕ хыççăн, çахна çирĕппĕн шанса тăраççĕ: çакă вăл Гитлерпа унăн шайкишĕн юлашки атăкăра пулса тăрĕ. Эпир, совет граждăнĕсем, хамăр кирек ĕçта пусан та, хамăрăн тăван çĕршывăн патрчĕсем пулăпăр. Эпир пĕлетпĕр, пи халăх, пирĕн правительство вăрçа пуçласшăн пулман, анчах у пире хам илсе кĕнĕ, çазна çĕмĕрсе кĕç. Халăхсен çулпуçне Сталин юлта пирĕнтен пĕтĕм чĕререн салам кал

Совет Союзĕн Шанхайри граждăнĕсем.

Шанхай, СССР граждăнĕсен клубĕ (ТАСС).

Пĕтĕм вăя хурса ĕçлер, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çар валли, Тинĕс-Çар Флочĕпе Авиаци валли мĕн кирлине пурне те туса парар!

☆ ★ ☆

Хĕрлĕ Çара кайнă арçынсен выраннe хĕрарăмсем йышăнаççĕ

«Эпир, Шупашкарти макарон фабричне ĕçлекен рабочисем, инженерно-химически работниксем тата служащисем, фашистла Германи çарĕсем çĕрĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăнине хирĕç большевикла парти тата ратнă çулпуç Сталин юлташ тавра тах та çирĕпрех пĕтĕçнипе ответлетĕр.

Эпир ĕç дисциплинине халичченхинн те ытларах çирĕплетме, ĕç тухăçхне ӳстерме, пысăк пахалăхлă продукци кăларса тăма пулатпăр.

Хамăр правительствăна çакна шанрса калатпăр: урса кайнă тăшмана çĕпех пĕтерсе тăкма пирĕнтен кашех алла винтовка тытса çапăçма хатĕр».

Шупашкарти макарон фабрикинчи рабочисен, инженерно-технически работниксен тата служащисен коллективĕ çакăн пек резолюци йышăннăччĕ. Фабрика коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртнине пырать. Мобилизаци пуçланнă хыççăнхи пĕрремĕш кун производствăллă плана ытлашшипех тултарнă. Июнь уйăх планне 28-мĕшне тултарма тăрăшаççĕ.

Кунта ĕçленĕ Николаев Хĕрлĕ Çара тухса кайнă. Унăн ĕç вырăнне работница Денисова юлташ йышăннă. Çĕнĕ ĕçре вăл малтанхи кунах нормăна 164 процент тултарнă.

М. Т.

Пирĕн большевикла ответ

КУСЛАВКА, июнĕн 25-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Молотов юлташ Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Сталин юлташ хушнипе пирĕн çĕршыври çĕтĕм халăха, мĕнпур рабочисемпе ĕçченсене тата интеллигенцине, аркинсемпе хĕрарăмсене—пурне те хăйăн ĕçне, хăйсен обязанноçне тивĕçлĕ пуланулăхпа туса пыма чĕнчĕ.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем; инженерно-технически работниксем пирĕн правительство чĕнĕвне большевикла хастарлăхпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Комбинат коллективĕн производствăллă çĕкленĕвĕ çавтери вăйлăн пынине кайрĕ. Кашни рабочипе работницă, кашни инженерпа техник хăйĕн участокĕнче тухăçлăн ĕçлет, хăйĕн çăмăллă пирваййи тивĕçне пурнăçа кĕртет.

Работницăсем — Вера Родионова, Елизавета Фадеева, Мария Ильина, Нина Кирбитова, Анна Мошкова тата темиçе вунпăр работницăсем кулленхи нормăна 160—200 процент тултараççĕ.

Рабочисемпе работницăсем, инженерно-технически работниксем хăйсен большевикла сыхăлăхне, дисциплинăлăхне, организацилĕхне ӳстерсе çирĕплетеççĕ. Вĕсем тăван çĕршыв обороннe тĕреклетме, Хĕрлĕ Çара пулăшма ырми-канми ĕçлеççĕ.

Эпир хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çа урса кайнă тăшмана ним юлмичче: çĕмĕрсе аркатса пăрахасса шанса тăратпăр, çак çĕнтерĕве тума Хĕрлĕ Çара ĕçпе, кĕрешӳпе, кирлĕ пулсан, хамăрăн пурнăçпа пулăшатпăр.

КИСЕЛЕВ.

Партбюро секретарĕ.

Фашистла бандитсене вилĕм сунаççĕ

ШАХАСАН. Районри учрежденисемпе предприятисенче тата колхозсенче пуçнче те нумай сынлă митингсем пуларттараççĕ. Районри колхозниксем, рабочисем тата служащисем митингсенче хаклă калана сăмахсенче фашистла бандитсем пирĕн таса тăван çĕршыва ултавлăн вăрă-хурахла тапăннăн хаярăн çилленсе тарăхаççĕ, вăрă провокаторĕсен сĕмсĕр ĕçĕсене отлетсе харпăрхăй вырăнĕнче пĕтĕм çын хурса ĕçлеме, кирлĕ пулсан алла тăпăтал тытса юлашки тумлам юн тăкмичченех çапăçма хатĕррине кăтартма параççĕ.

Ĕçсыннисем митингсенче пĕр кăмăллă пулса йышăннă резолюцисенче фашистла вăрă-хурахсене пирĕн таса çĕршыв территорийĕнчен хăваласа кăрма Совет правительстви хамăрăн ĕçсене приказ панине чĕререн ырлаççĕ.

Шăхасанти «Красный Октябрь» колхози допризывник Гущин юлташ çапла калать:

— Фашистла Германия пирĕн аттесĕн çĕнтерĕвĕсене, пирĕн телейлĕ çамрăклăха туртса илесшĕн. Анчах эпир ун пек тума парас çук. Пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар сĕмсĕр фашистсене çапса салатăр. Эпĕ паянах хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, тăван çĕршывшăн, Сталиншăн хамăн пуçа шеллемесĕр çапăçма хатĕр.

Витĕмлĕ те хăватлă сăмахсем калаççĕ колхозниксем.

— Фашистла бандитсем пирĕн çине ирсĕррĕн тапăннине ответлесе, — тет Сителти «Победа» колхоз председателĕ Тимофеев юлташ, — хамăрăн тăван çĕршывăн оборона хăватне татах та тĕреклетĕпĕр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр. Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота пур майсемпе те пулăшса пырăпăр, государствăна халех пурнăçлăпăр, — тет вăл.

Районри ĕççыннисем пирĕн çĕршыв çине тискеррĕн тапăннă тăшмана çапса салатас тĕлĕшпе Совет правительстви туса ирттерекен пур мероприятисене те пĕр кăмăлпа хапăлланççĕ, фашистла бандитсене вилĕм сунаççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Колхозниксен пысăк организованноçĕ

ЛĔК. (**Телефон тăрăх**). Гитлеровецсен—урса кайнă йытăсен киревсĕр ĕçхирĕç çапăçакан хамăрăн мухтавлă олĕ Çара колхозниксем колхоз производствинче стахановла ĕçленипе, государство умĕнчи обязательствăсене вăхчен тултарнипе пулăшаççĕ.

Мăн Вылăри тата Мăн Шĕвĕршри колхозниксем тырпула уйхиртен пуçса кĕме хатĕрленсе çитнĕ. Колхозниксем колхоз производствин ытти сенче те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Çĕнĕ заемшăн укçа пухасси те вăйăнса пырать. Сырăннă заемшăн срок укçа тӳлесе татни тăван çĕршыва реклетни пулнине колхозниксем лакăнланнă. Паниклейри колхозниксем тенкĕ, Вылăри колхозниксем 500 нкĕ, Шĕвĕршри колхозниксем 350 тенкĕ пухса июнĕн 24-мĕшĕнче перекет сине кайса хывнă.

Николаева юлташ машинно-трактор-

Пĕр хут мар эпир аркатнă тăшмансен çарне

1.

Айтăр, тантăшсем, тухатпăр
Çапăçу хирне.
Фашистсен ури ан пустăр
Пирĕн çĕр çине.
Пĕр хут мар эпир аркатнă
Тăшмансен çарне.
Айтăр, тантăшсем, тухатпăр
Çапăçу хирне.

2

Хаклă аннесем, ан хăрăр,
Уçă пирĕн çул:
Çапăçу уйхирĕ витĕр
Курăнать çĕн çул.
Вут-вăрçă витĕр çĕкленнĕ
Ирĕклĕ кунçул.
Хаклă тăвансем, ан хăрăр,
Пулĕ çĕнтерӳ

3

Тĕнчипех телей хĕвелĕ
Тухĕ ялтăрса:
Кашнинех кӳрĕç телейлĕх
Хĕрлĕ çăлтăрсем.
Хĕрлĕ Çар татах чап илĕ
Çĕнтерӳ туса.
Тĕнчипех телей хĕвелĕ
Тухĕ ялтăрса.

4.

Аслă Сталиншăн, çĕршывшăн
Тухар вут-вăрçа.
Çапăçар аслă çулпуçшăн,
Чыслăн çапăçар.
Пирĕнпе куллен мухтантăр
Паттăр Хĕрлĕ Çар,
Аслă Сталиншăн, çĕршывшăн
Тухар вут-вăрçа!

М. ЯСТРАН.

Совет патриотизмĕн демонстрацийĕ

Радио калаçма чарăннă... Вăл халĕ кăна Вячеслав Михайлович Молотов Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Сталин юлташ хушнипе каланă простой, лăпкă, анчах та шанчăкпа вăй-хăватлăн тапса тăракан сăмахсене тăван çĕршывăн мĕнпур кĕтессисене çалатнă.

Çĕршывăн тĕрлĕ пункчĕсенче пурăракан, пурте пĕр шухăшлă пиншер çынсем çийĕнчех телеграфа кайнă. Çырса тултарнă бланкăсене васкаса çанă вĕсем. Пурин валли те пĕр адрес:

«Мускав. Кремль. Сталин юлташа, Молотов юлташа».

«Радистсен группин старшинине Гордеева флот ячĕсене яма ыйтатăп. И. И. Гордеев. Мускав».

Çапла çыраççĕ рабочисем, врачсем, инженерсем, профессорсем, студентсем, служащисем, преподавательсем, колхозниксем, пĕтĕм совет халăхĕ.

«Приказ илнĕ. Есть, Молотов юлташ! Тăван çĕршыв — унăн ывăлĕсемпе хĕрĕсем хăйсен ĕçне пĕлеççĕ. Техникăпа, пĕлӳлĕхпе, тĕрĕс ĕçпе тата чăнлăхпа — çĕнтеретпĕрех. Вăрă-хурахсене — вилĕм! Халăхсене — мир, тăшмана — аркату! Фельдшерсен Ногинскри шкулĕн преподавателĕ Камнев».

Махач-Каларан Мускава профессор-хирург Ильченко юлташ телеграмма янă.

«Мана фронта ярасси çинчен распоряжени пама ыйтатăп».

Хăйсен правительстви ирсĕр тăшмана хирĕç пыракан çапăçусенче çĕнтерӳ туптама чĕнни çине совет çыннисем çапла темиçе сăмахпа ответ параççĕ.

Çапла çыраççĕ: Магаданри Востриков, Краматорскри Черватенко, Актюбинскри Именов, Ясная Полянăри Шаулин, Лельчицăри (БССР) Петрушеня, Свердловскри Болдырев, Березникири Примак юлташсемпе ытти нумай, нумай юлташсем.

Совет халăхĕн боевой традицийĕсем—вăйлă та çирĕп. Пирĕн тăван çĕршыври çулăмлă патриотсем çав традицисемпе пурăннă тата халĕ те вĕсемпе пурăнаççĕ.

Германи фашизмне хирĕç халăхăн тăван çĕршывăн пыракан вăрçи пуçланчĕ! 200 миллионлă халăхăн чĕрĕсенче киревсĕр вăрă-хурахла ĕçĕн организаторĕсене хирĕçле хăватлă та таса курайманлăх туйăмĕ вĕресе тăрать.

Çак асран кайми кунсенче пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисем аслă Сталин — çулпуç тата тăшмана çĕнтерес ĕçĕн организаторĕ — тавра çирĕппĕн пĕрлешсе тăраççĕ.

Июнĕн 23-мĕш. (ТАСС).

Стахановла ĕçлесе тăван çĕршывăн оборонине çирĕплететпĕр

Çĕмĕрлере ФЗО шкулĕ уçăлать тенине пĕлсен, унта вĕренме илме ыйтса васкасах заявлени патăм. Манăн ыйтăва районри призыв комиссийĕ пурнăçа кĕртрĕ.

Паян эпĕ юратнă шкулта вĕренетĕп. Вĕренес хастарлăх та пысăк. Халĕ лучковăй тата кроскот пăчăкăсемпе ĕçлеме, вĕсене юсаса майлаштарма вĕренсе çитрĕм. Ывăçсене мĕнле майпа касмаллине, мĕнле ывăçа хăш майлă çурассине те хăнăхрăм.

Нумаях та пулмасть мана бригадир турĕç. Ку маншăн татах та ответлă ĕç. Хама шанса панă ĕçе лайăх туса пырасса ĕненсе тăратăп.

Часах эпир шкултан вĕренсе тухатпăр, квалификацилĕ рабочисем пулатпăр. Эпĕ çакна калама пултаратăп: партипе правительство мана ăçта ярать, çавăнта эпĕ савăнса ĕçлетĕп, стахановла ĕçлесе хамăрăн тăван çĕршыв валли продукци ытларах та ытларах туса парассишĕн, тăван çĕршывăн оборонăллă тĕреклĕхне çирĕплетессишĕн ырми-канми кĕрешетĕп.

М. ПЕТРОВ.

Лесорубсен бригадирĕ.

Тăван çĕршывшăн!

СĔНТĔРВĂРРИ, июнĕн 24-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Районри колхозсемпе предприятисенче нумай çынлă митингсем пулса иртрĕç. Митингсенче йышăннă резолюцисенче ĕççыннисем урăх фашизма отпор пама хатĕр тăни çинчен пĕлтереççĕ, производствăра стахановла ĕçлеме, дисциплинăллă пулма сăмах параççĕ.

Хĕрлĕ Çара илме ыйтса заявлени паракан доброволецсем нумай. Чăваш писательĕ П. Митта хăйне Хĕрлĕ Çара яма ыйтать. «Красная Армия» колхозри комсомолецсем К. Трудиев, А. Морозов, П. Матвеев тата ытти юлташсем военкомата заявленисем пырса панă. Сĕнтĕрвăрринчи пулă тытакан колхоз председателĕ, ВКП(б) членĕ Г. Заикин юлташ хăйĕн заявленинче: «Манăн ывăл Хĕрлĕ Çарта пурăнать, ывăлпа пĕрле эпĕ те тăван çĕршывшăн çапăçма каятăп», тесе çырать. Çавăн пекех эрех заводĕнче ĕçлекен, граждан вăрçинче доброволец пулса çапăçнă Ф. Винокуров, ялхуçалăх техникумĕн преподавателĕ Г. Германтов, медработница А. Иванова, парикмахерша А. Сметанина т. ыт. юлташсем те Хĕрлĕ Çара илме ыйтса заявленисем панă.

А. ГОРДЕЕВ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Сывлăшра тата çĕр çинче

ПРИБАЛТИКА УИРАМ ÇАР ОКРУГĔ, июнĕн 24-мĕш. («Правда» хаçатăн ятарласа кайнă корреспонденчĕ). Мухтавлă пограничниксем совет çĕрĕн кашни пусăмне кăкăрпа тăрса хӳтленĕ. Паттăр боец-чекистсем фашистла вăрă-хурахсен регулярнăй чаçĕсене малалла кайма чарса тăнă. Хăйĕн пурнăçне пама хатĕр тăракан кашни боец ăнланнă: мĕн кирлине яланах тумалла, анчах тăшмана чарса тăмалла. Çакă вăл—таса тивĕçлĕх. Пограничниксем пĕлнĕ, тăвал çĕршыв çийĕнчех тăпăнма кĕтсе илме, çĕмĕрсе тăкма приказ парать. Приказ пана.

Пограничниксем пенĕ сасăсем те лăпланман-ха, хăшпĕр çĕрте штыксем вĕççĕн çапăçма та чарăнман-ха, гитлерла бандитсене хирĕç хăватлă Хĕрлĕ Çар, совет патриочĕсен çарĕ тапранса та тухнă.

* * *

Молотов юлташăн выступленине боевой летчик яланхи пек мар обстановкăра итленĕ. Вăл госпитальре выртнă. Радио калаçма чарăнсанах, летчик койка çинчен тăнă та госпитальрен тухса кайнă. Тепĕр çур сехетрен вăл хăйĕн часĕнче пулнă. Часах унăн хăвăрт вĕçекен истребителĕ çывхарса килекен тăшмана хирĕç вĕçсе тухнă.

Тепĕр кунне летчик хăйĕн трофейисен «текущи счетне» уçнă: сывлăшри çапăçура вăл тăшман машини çине тапăннă та, пулеметран темиçе хут персе, фашистла çăхана çĕр çине ăсатнă.

Виçĕ кун кăна иртрĕ-ха, анчах сталинла соколсем пайтах мухтавлă ĕçсем тума ĕлкĕрчĕç. Тăшман эскадрильи пирĕн истребительсем тăракан аэродром çине кĕтмен çĕртен килсе тапăнма хатĕрленнĕ. Кĕтмен çĕртен тапăнма ĕç тухман унăн. Сăнаса тăракан постсем фашистла «Юнкерссен» атаки çинчен малтанах пĕлтерсе хунă. Вĕлесем аэродром зонине пырса та çитейменех-ха, вĕсен çурăмĕ хыçĕнче хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсем кĕрлеме те пуçланă. Совет авиацийĕн паттăр соколĕсем пирваййи боевой вĕçеврех çĕрлехи пĕлĕтри тăшмана хăвăрт шыраса тупма пĕлнĕ, ун çине тапăннă.

Çĕрле килсе тапăнакан нимĕçсем хăйсене çапла кĕтсе илессе шухăшламан. Нимĕн тума аптăраса, вĕсем урăх еннелле çул тытнă, мĕн вăй çитнĕ таран хăвăртрах вĕçме пуçланă, тарса пытанма хăтланнă. Летчик-истребитель Кудрявцев пулеметран персе лектернипе нимĕç монопланне вут хыпса илет. Кĕмĕл тĕслĕ çуначĕсем çине фашистла свастика ӳкерсе хунă самолет аялалла персе анать. Часах тепĕр «Юнкерсĕ» те çавăн пекех персе анать. Истребительсем тăшмана зенитчиксен аллине параççĕ. Çӳлелле перекен мастерсем хăвăрт та лайăх ĕçлеççĕ. Пĕтĕмĕшле итог: 12 «Юнкерс» вĕçсе килнĕ, тăваттăшĕ тарса хăтăлнă.

* * *

Сывлăшра истребительсен звени противнике тĕл пулнă. Совет авиацийĕн виçĕ самолечĕ хăвăрт вĕçекен 9 бомбардировщик çине хăюллăн тапăнаççĕ. Тăшман хăраса ӳкнĕ, тинĕс еннелле тарма хăтланать. Командир истребителĕ бомбардировщиксенчен пĕрин çине сӳлтен чăмса анать, тепĕр темиçе секундăран фашистла машина Рижски заливăн тĕпĕнче канăç тупать. Унтан командир пĕтĕм звенопа пĕрле атака пуçлать. Татах тепĕр бомбардировщик тинĕс çине персе анать.

* * *

Хĕрлĕ артиллеристсем те отлично ĕçлеççĕ. Пирĕн поэтсем оруди командирĕ кĕçĕн сержант Т. çинчен сăвăсем çырĕç-ха. Вăл тăшманăн танклă вăйăсене хирĕç туса ирттернĕ сложнăй, йывăр операцин участникĕ пулнă. Т. ертсе пынипе оруди расчечĕ Германи танкĕсене питех те тĕл пере-пере лектерсе амантнă. Пĕрре çакăн пек килсе тухнă: командир оруди патĕнче пĕченех тăрса юлнă. Хăй çинчен пĕр секунда та шухăшламасăр, вăл противнике тӳрех пере-пере çĕмĕрнĕ.

Совет çыннисем, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем çĕршер те пиншер чаплă, паттăр ĕçсем турĕç. Кашни паттăр ĕç вăл — юн ĕçсе тăранма пĕлмен фашистла тискер-кайăка çĕнтерес тĕлĕшпе тунă пĕчĕк, анчах шанчăклă утăм. Кашни паттăр ĕç вăл — совет çыннисем Ленин—Сталин партине вĕçĕ-хĕрлĕсĕр, пĕтĕм чĕререн парăннине татах тепĕр хут кăтартса паракан документ.

Пĕтĕм фронтра — Балти тинĕсĕ патĕнчен Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан анлă фронтра — красноармеец формипе тумланнă совет çыннисем, Сталин ятне чĕрере тытса, хăйсен тăван çĕршывĕн мухтавĕшĕн паттăр та чаплă ĕçсем тăваççĕ.

В. АРДАМАТСКИЙ.

Сталинла соколсем

ПРИБАЛТИКА УИРАМ ÇАР ОКРУГĔ, июнĕн 24-мĕш. («Правда» хаçатăн ятарласа кайнă корреспонденчĕ). Тĕттĕмленсе килсен, 5 бомбардировщик сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Вĕсен тăшман территорийĕ çинчи противник çине бомбăсем кайса пăрахмалла пулнă.

Палăртса хунă пункт çывăхĕнче совет бомбардировщикĕсене хирĕç тăшман истребителĕсем вĕçсе çĕкленнĕ. Совет самолечĕсен стройне пăсма хăтланнă «Мессершмитта» кĕçĕн лейтенант Клещин хăвăртах персе антарнă. Противникăн ытти истребителĕсем çавăнтах аяккалла пăрăнса кайнă.

Акă, боевой заданире кăтартнă пункт. Командир машини тăшман аэродромĕ тĕлĕнче вĕçсе пырать, ун çине бомбăсем пăрахать. Ытти тăватă машини боеприпассен склачĕсем, горючи тултарнă цистернăсем çине, чугун çул çине бомбăсем пăрахаççĕ.

Заданине тĕп тĕрĕс пурнăçа кĕртсе, самолетсем хăйсен базине тавăрăнаççĕ. Çавăнтах сывлăша машинăсен тепĕр группи вĕçсе çĕкленет. Штурман кирлĕ çĕрелле çул тытать. Часах вăл çул çинче противник танкĕсен колоннине курать. Танксем саланса кайма хăтланаççĕ, анчах ĕлкĕреймеççĕ. Вĕсем çине летчиксем пăрахнă бомбăсем пырса ӳкеççĕ. Эскадрилья каялла тавăрăнать. Заданине пурнăçа кĕртнĕ. Пирĕн çухатусем пулман.

Командир-орденоносец бомбардировщиксен пысăк группине хăюллă рейса илсе тухать. Çак группа пысăк та кирлĕ задание пурнăçа кĕртет. Ултă «Мессершмитт» эскадрильи çине пырса тапăнма хăтланаççĕ. Лайăх ĕçлет стрелок-радист Клещин. Вăл противник истребительне персе антарать. Ытти машинăсем çинчи стрелок-радистсем тăшманăн тепĕр 4 истребительне персе антараççĕ. Ултăмĕш — тарать.

Çакă кун летчик сержант Ручко тата кĕçĕн летчик Бычков пысăк чăтăмлăх кăтартнă. Боевой вĕçев вăхăтĕнче вĕсен машинисене сиен кӳнĕ пулнă. Анчах икĕ летчикĕ те вĕсене хăйсен аэродромне илсе çитернĕ.

Çулталăк планне тултарчĕç

ИШЛЕЙ. Чантăр ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем, рабочисемпе служащисем тата единоличник-хресченсем 1941 çулăн государствăна сĕт-çу тăратас плана пĕтĕмпех тултарчĕç.

Е. ТЮРИН.

Фашизма хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çĕклленсе тăчĕ. Германи фашизмне пĕтеретпĕрех!

СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ӳкĕрлевпе Еçлесен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ нăсалхи июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх сăмах тухса чăлнă май Мускаври «Серп и молот» ячĕллĕ металлургия заводĕнче пулнă митинг. Сăмах тухса чăлнăранни — партбюро секретарĕ А. Д. Серов юлташ. Е. Халдей фото-ĕçченĕ. (ТАСС).

Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçи

I. Эпир тĕрĕслĕхшĕн кĕрешетпĕр

1941 çулти июнĕн 22-мĕш кунĕ истори совет халăхĕ фашистла Германе хирĕç, Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăннăскерне хирĕç, отечественнăй аслă вăрçă пуçласа янă кун пулса кĕрет. Пирĕн тăван çурта тапăнса кĕнĕ вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешме 200 миллионлă совет халăхĕ шурте пĕр çын пек пулса çĕкленĕ. Шучĕ те çук нумай тăшмансене хирĕç кĕрешсе пырса, ССР Союзĕнчи халăхсем хăйсен ирĕклĕ те хăватлă тăван çĕршывне туса хучĕç. Хăйсен çак отечествине вĕсем паттăр кĕрешӳпе, çине тăрса ĕçленипе, хăйсен кăкрипе сыхласа тăрса, кĕрешсе илчĕç. Совет çыннисем хăйсен тăван çĕршывне, тĕнчери империализмлă пĕрремĕш вăрçă чухнехи юнпа пылчăк ăшĕнчен, граждан вăрçи чухнехи калама çук пысăк юхăнчăкран çăлса кăларса, халиччен курман çӳллĕше çĕклентерчĕç, иртнĕ вăхăтра кая юлнăскер пулнă çĕршыва вĕсем хăватлă та малта пыракан çĕршыв туса хучĕç. Çак кĕрешĕве Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ ертсе пычĕ.

Вырăс халăхĕн тата ССР Союзĕнчи ытти халăхсен историйĕ паттăрлăхăн, кĕрешӳре харпăрхăйне шеллеменнин, кĕрешӳре чăтăмлă пулнин примерĕсене, тахçанах иртнĕ ĕмĕрсенче пулнă тата хальхи кунсенче те пулса пыракан çăвăн пек тĕлĕнмелле ырă примерсене пĕлет. 1242 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнче Пăр çинчи çапăçу вăхăтĕнче вырăс çыннисем çавтери паттăрăн çапăçинче пурте пĕлеççĕ, ун чухне Ливон орденĕнчи «ытă-рыцарьсене»—паян кунхи фашистсен тахçанхи аслашшĕсене—çĕмĕрсе тăкнă, вĕсене, Маркс сăмахĕсемпе каласан, çав «прохвостсене» вырăс çĕрĕ çинчен кăларса ывăтнă, хăваласа кăларнă.

Вырăс халăхĕн историйĕнче отечественнăй вăрçăсем пулнă, ун чухне халăх, аслă хваслăхпа çĕкленсе, тăшмансен çарĕсене, вĕсен руководителĕсем пĕтĕм тĕнчипе пуçпулса тăма ĕмĕтленнĕскерсене, шăла-шăла ывăтнă. 1812 çулта вырăс халăхĕ чи аслă полководецсенчен пĕрине—Наполеона çĕмĕрсе тăкнă, унăн хăйĕн çарĕн мĕскĕн юлашкийĕсемпе пĕрле Российăран тухса тармалла пулса тăнă. Ун чухне пĕтĕм халăх тăшмана хирĕç çĕкленнĕ. Пусмăрçăсене хăваласа яма хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсем хĕçпăшалланнă. Вара пĕтĕм Европа урлă каçнă çара, Сирире, Египетра, Вăтăçĕр тинĕсĕнче çĕнтерсе хăй пуçпулнă çара,—çав çара çапăçусенче вырăссен чаплă полководецĕсем Кутузов, Багратион тата ыттисем те çĕмĕрсе тăкнă. Ана отечественнăй вăрçăра çĕмĕрсе тăкнă, çав вăрçа хресченсем миллионшăрăн хутшăннă.

Интервенци вăхăтĕнче, нимĕçсен войскисем Украинăна, Белоруссие тата ытти крайсемпе облаçсене оккупацилеснĕ чухне Германири империалистсем халăха тискер асапсемпе хĕн-хурăсем кăтартнине, вĕсем халăхран мăшкăллаканине пирĕнтен никам та манман-ха тата манас та çук,—ун чухне нимĕçсен войскисене хĕçпăшалланнă халăхпа Хĕрлĕ Çар хăваласа кăларнă.

Фашистсен çак вăрă-хурахла тапăнуне тивĕçлипе отпор пама тата, унпах чăранса тăмасăр, **вĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма** пирĕн ĕнтĕ хамăртан историллĕ обстанока мĕн ыйтнине, хамăран тăван çĕршыв умĕнче, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем умĕнче мĕн тумалли пурне те пурнăçа кĕртмелле.

Вăрçă ан пултăр тесе совет правительстви хăй мĕн тума пултарнине пурне те турĕ. Вăрçă çур тĕнчене ярса илнĕ вăхăтра та мире сыхласа тăрас тесе совет правительстви хăй мĕн тума пултарнине пурне те туса пычĕ. ССР Союзĕпе Германи хушшинче тунă договорăн условийĕсене пурне те совет правительстви пĕтĕмпех тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Анчах çав вăхăтрах вăл Германин фашистла правительстви киревсĕр ĕçсем тума хатĕрленсе пынă кашни утăмнех тинкерсе сăнаса пычĕ,—Германин фашистла правительстви, Гитлер сăмахĕсемпе, Германин вăрçăри тĕллевĕ—Европăра фашизм гегемонине туса хурасси пулать, вăл Европăри мĕншăн государствăсемпе халăхсене фашистла «çĕнĕ йĕркене» пăхăнма хушать, тесе пĕлтернĕ. Çав «çĕнĕ йĕрке» вăл, пурте пĕлеççĕ, нумай çĕршывсен тата халăхсен рабочи класне, ĕçсыннисен массисене тискеррĕн хĕсĕрленипе пусмăрланинче пулса тăрать,—Германие хăйне талкишшех концентрацилле лагерь туса хунă çинчен вара каласси те çук. Германин юнăн çунакан фашистла правительстви, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие, Грецие тата ытти халăхсене те пусмăра кĕртсе ӳкернĕскерсем, пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнчĕç. Германи фашисчĕн аттипе советсен таса çĕрне таптама ирĕк пама совет халăхĕ пултараймасть тата таптама парас та çук,—советсен çак таса çĕрне эксплоататорсене хирĕç, патшана хирĕç, помещиксемпе капиталистсене хирĕç кĕрешсе илнĕ, халăхăн тарĕпне тата юнĕпе шăварнă.

Германия çак совет халăхне хирĕçлесе вăрçа Финляндипе Румынине хутшăнтарать. Финляндири белогвардеецсем, Германири фашистла палачсемпе тата Румынири боярсемпе пĕрле, пирĕн советлă таса çĕре пусмăрласшăн. Анчах вĕсем хăйсемех инкек курĕç! Мĕншĕн тесен Совет Союзĕнчи 200 миллионлă халăх, никам çĕнтерейми хăватлă хастарлăхпа çĕкленсе, çав палачсене çĕр çинчен шăлса ывăтать, халăхсене валли мир туса пама тата никама пăхăнмасăр пурăнма май туса пама, фашистла чир-чĕрĕн çав вучахĕсене ним мĕн хăвармичченех çĕмĕрсе тăкать.

Граждан вăрçи вăхăтĕнче совет халăхĕ интервентсенĕ хирĕç отечественнăй вăрçă туса пычĕ, çав интервентсем пирĕн государствăна çĕр çинчен шăлса ывăтасшăн пулнă. Халĕ ĕнтĕ эпир каллех отечественнăй аслă вăрçă пуçласа ятăмăр. Анчах ун чухне, 1918 çулта, эпир вăйсăр пулнă, пирĕн опыт пулман, эпир ун чухне тин-ха Хĕрлĕ Çар туса пынă. Халĕ ĕнтĕ хăватлă совет государстви пĕтĕм хĕçпăшалпа хатĕр тăрать, вăл пит пысăк вăй-хăват тата опыт пухнă, ССР Союзĕнчи халăхсем аслă туслăхпа пĕтĕсле пурăнаççĕ. Çак отечественнăй вăрçăна ĕнтĕ хăй тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнине пĕлсе тăракан халăх туса пырать.

II. Мĕне хӳтлемелли пирĕн пур

Тăшмансем юнпа та вутпа тата тинмĕрпе, экономикăллă блокадăпа, провокацилле тапăнусемпе тата элекче çамрăк совет республикине пĕтерсе хума тăрăшрĕç, анчах вĕсен çавăн пек тискер тăрăшăвĕ пĕтĕмпех ăнăçсăр вĕçленчĕ.

Граждан вăрçи вăхăтĕнчи çĕкленӳ совет халăхĕн, хăйĕн ирĕклĕхне, хăйĕн тăван çĕршывне сыхласа хăварма мĕнпур йывăрлăхсене тӳссе ирттерни кирлине ăнланса илнĕ халăхăн, аслă вăйне палăртса тăнă. Граждан вăрçин историне çĕнĕрен вуласа пухнă чухне пирĕн умма ютçĕршыв интервенчĕсене хирĕç, белогвардеецсен генералĕсене хирĕç пулнă вăрçăри вĕçĕмсĕр нумай геройсен сăн-сăпачĕсем тухса тăраççĕ, час-часах тата çав геройсен ячĕсем те палла пулса юлман. Пирĕн умма Перекоп геройĕсем, пансен Польшине хирĕç пулнă вăрçăн геройĕсем сăн-сăпачĕсем, граждан вăрçинчи чаплă полководецсем, ĕçсыннисен ĕçĕнĕн кĕрешсе хăйсен пурнăçне панă çынсен: Чапаевăн, Щорсăн, Лазон, Пархоменкăн тата ытти сен те нумайĕшин сăн-сăпачĕсем тухса тăраççĕ. Вара чĕре çавăн пек чаплă та паттăр ывăлсене пăхса ӳстернĕ советлă тăван çĕршывшăн, хамăран паттăр халăхшăн хĕнĕртесе савăнать. Граждан вăрçи этемлĕх историйĕнче халиччен пулман **массăллă героизм** çуратрĕ, миллионшар патриотсене пăхса ӳстерчĕ, вĕсем, ĕçсыннисем тăван çĕршывне хӳтлесе, **хăйсене пĕрте шеллемесĕр** кĕреширĕç. Ун чухне обстановка пит йывăр пулнă. Анчах сивĕпе выçлăх тӳснĕ пулин те, пит пысăк нуша тӳссĕ пулин те, Ленин тата Сталин ертсе пынă совет çĕршывĕ, хăйĕнчен вăй тупса, контрреволюцие тапхаса лаччăтрĕ, интервентсене хăваласа кăларса ячĕ.

Мĕн пек каялшăлăха, мĕн пек патриархальщинăна совет власăн çĕнтернине миллионшар ĕçсыннисем пĕлсе тăраççĕ, вĕсем совет власăн пит аслă çитĕнӳрисемпе тивĕçлипех мухтанаççĕ. Сталин пятилетăкĕсем пирĕн çĕршыва çăлăçнă пекех, массăллă героизм кăтартаççĕ. Аслă халăха пит пысăк каналсем тунă çĕрте, шурлăхсене типĕтнĕ çĕрте, халăх хуçалăхне аталантарнă çĕрте малалла илсе пыракан вăй,—çак вăй тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте те хăйне кăтартă. Совет çĕршывĕ чĕрĕк ĕмĕр хушшинче хăйĕн пит пысăк вăйĕсене анлăн сарса янине кашни совет гражданинĕ пĕлсе тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ тăшмана хирĕç, пирĕн таса çĕр çине талăнма хăйнă, пирĕн аслă строительствăра пире чăрмантарма хăтланакан çав тăшмана хирĕç, эпир пурте пĕр çын пек пулса ответлĕпĕр, мĕншĕн тесен эпир пурте, совет çыннисем,—хамăран тăван çĕршывăн патриочĕсем.

Мĕне хӳтĕлемелли пирĕн пур. Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ кăтартса панă çул çинчен, совет правительстви кăтартса панă çул çинчен пире пăрса яма пултаракан вăй çук. Пирĕн моралльĕ-политикăллă пĕрлĕх туллин те çуттăн, тивĕçлипе палăрмалли вăхăт çитрĕ: совет правительствин приказне, вăл «вăрă-хурахла талăнăва» сирсе яма тата Германи çарĕсене пирĕн тăван çĕршыв территорийĕнчен хăваласа кăларма» хушнине эпир большевиксен партин тата совет правительствин мĕнпур боевой решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пынă пекех пурнăçа кĕртĕпĕр. Эпир сăмсăр захватчиксене çĕмĕрмеллех çалма пĕлнине тăшман часах ĕнтĕ курĕ, мĕншĕн тесен пирĕн 200 миллионлă халăх хăй мĕншĕн çапăçнине ӳçăн пĕлсе тăрать.

III. Пирĕн вăй мĕнре

Пирĕн çĕршывра совет обществин моралльĕ-политикăллă çирĕп пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ,—кун пек пĕрлĕх халиччен тĕнчере ниçта та пулман-ха. Государствăн советлă системи ĕçсыннисене эксплоатаци пусмăрĕнчен хăтарни çинче, ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсен пĕртăвăллăхĕ тата вĕсен тăвăллă туслăхпа пурăнни çинче никĕсленсе тăрать. Совет патриочĕ ак çакăнпала мухтанса хĕпĕртет, вăл—çынна çын эксплоатацилессин тăшманĕ, халăхсен пĕртăвăллăхĕн тăшманĕ, вилĕ тата çынна краймалла фашистла теорисен тăшманĕ, расăллă тата нацилле пĕртăвăллăхна пусмăрлăхăн тăшманĕ. Пирĕн вăй хамăран фабрикăсемпе заводсенче, хамăран колхоз стройĕнче, пирĕн вăй—совет культурине, совет науки-не. Совет патриотизмĕ халăх çĕнĕ государствăна юратнин палăрăмĕ пулса тăрать, çак çĕнĕ государство миллионшар çынсене пурнăç патне çĕклерĕ, вĕсен пурнăçне çĕнĕ ырă содержанилле туса хучĕ, çĕнĕ анлă малалăхсем ӳсса пачĕ, иртнĕ вăхăтри ăрусен кĕрешӳне ăнланса илме май пачĕ тата тăрăшнисем, хĕн-хур тӳснисем, юн юхтарнисем харама кайманнине кăтартса пачĕ.

«Пирĕн çынсем нумай юн юхтарни харама кайманнине, вăл хăйĕн результачĕсене панине пĕлме, — тесе каланă Сталин юлташ Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайлă VIII съездĕнче,—кăмăллă та савăнăçлă. Çакă вăл пирĕн рабочи класа, пирĕн хресченсене, пирĕн çĕлĕ интеллигенцине шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнче хĕçпăшаллантарать. Çакă вăл малалла илсе пырать тата тивĕçлипех кăмăла хăпартать».

Хамăран вăйсем çине çакăн пек шайса тăнипе, хĕрӳллĕ совет патриотизмĕн, хамăран тăван çĕршыва юратнин обстановкинче совет çĕршывĕнчи ăслă кадрсем, наукăн çĕнĕ çыннисем, çĕнĕ ӳлсем хывса пыракан, кивĕ нормăсене çĕмĕрекен çынсем ӳссе çитĕрçĕç, чапа тухнă аэронавтсем, чаплă вĕçĕвсен геройĕсем ӳссе çитĕнçĕç. Вĕсем, совет авиацийĕн соколĕсем, хăйсене кăтартăç-ха! Ĕç фронтĕнче тăван çĕршыв чечекленĕвĕшĕн нимĕнрен хăрамасăр кĕрешекен бсрецсем, стахановецсем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсем продприятисенче, колхозсемпе совхозсенче хăйсен активлăхне татах та ытларах сарса ярăç, ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерĕç, кашни участокрах ĕçе татах та лайăхрах йĕркелесе ярăç. Рабочисем заводсенче, колхозниксем уйхирсенче, Молотов юлташ калана сăмаха сӳтсе явса, продукци туса кăларассине икĕ хут ӳстерме пулаççĕ. Эпир пĕртте иккĕленмесĕр шанса тăратпăр, вĕсем çак обязательствăна пурнăçа кĕртĕç, совет халăхĕ, ĕç унăн пурăçри интересĕсене пырса перĕлсан, хăй мĕн пек пысăк вăй сарса яма пултарнине кăтартĕ.

«Аса илĕр ха,—тесе каланă Фридрих Энгельс 1845 çултах,—1792 çулта ситичченхи вăхăтра революцилле çарсен, **иллюзишĕн, çук отечествăшăн** кĕрешнĕскерсен, хаваслă çĕкленĕвĕ мĕн пек тĕлĕнтерекен ĕçсем тунине, вара эпир иллюзишĕн мар, чăнлăхпах пурриншĕн кĕрешекен çар мĕн пек вăйлă пулмаллине ăнланса илме тивĕçлĕ».

ССР Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕ иллюзишĕн мар, çук отечествăшăн мар, хĕрӳллĕн юратакан, чапа тухнă советлă тăван çĕршывшăн, пĕтĕм совет халăхĕ геройла тăрăшнипе тата кĕрешнипе туса хунă, кĕрешсе илнĕ тăван çĕршывшăн кĕрешет.

«Вăрçă пулас пулсан,—тенĕ Энгельс,—çавăн пек обществăн» членĕ **«...чăн-чăн** отечествăна, **чăн-чăн** тăван киле сыхлассишĕн кĕрешĕ. ...Вăл, çапла ĕнтĕ, хаваслă çĕкленӳпе çине тăрса, хăюллă пулса кĕрешĕ, вăл çакăн пек кĕрешнипе тĕл пулсанах кучухнехи çарăн механически выучки улăм пекех саланса каймалла» (К. Маркс и Ф. Энгельс, Соч., т. III, стр. 278).

Паян ĕнтĕ совет патриочĕсен туйăмĕпе вăй-хăвачĕ пур чăрмавсене те çĕмĕрекен юхăма пĕрлешмелли кун, вăрçă кашни утăмрах массăллă героизм çуратмалли кун çитрĕ, тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн, ăна малаллах ӳссе пыма май туса парассишĕн совет çыннисем кирек мĕнле йывăрлăха та тӳссе ирттерме, кирек мĕнле **чăрмав**сене те çĕнтерме хатĕр тăнине пурнăçа кĕртмелли кун килсе тухрĕ, мĕншĕн тесен

«...землю,
которую
завоевал
и полуживую
выняньчил,
где с пулей встань,
с винтовкой ложись,
где каплей
льешься с массами,—
с такою
землею
пойдешь
на жизнь,
на труд,
на праздник
и на смерть!».

(Вл. Маяковский. «Хорошо»)

IV. Пирĕн хӳтлекенсем те тата мĕнпе хӳтлемелли те пур

Капитализмлă çĕршывсенче вăйпа ирĕксĕрлесе пуçпулса тăрас принцип малта тăрать, çавăн пек йĕри-тавралăхра никама та пăхăнман, хăйне уйрăм политика тытса пырасси совет государствишĕн çăмăл пулман.

Совет правительстви яланах хĕçпăшалланнă халăхăн хăватлă вăйĕсем çине, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн никам çĕнтерейми вăйĕ çине таянса тăнă тата халĕ те çаксем çине таянса тăрать, çавăнпа кăна совет государстви хăйĕн мирлĕ политикине пурнăçа кĕртсе пыма пултарнă,—çакна ĕнтĕ совет гражданинĕн нихăçан та манмалла мар.

Империализмлă пĕрремĕш вăрçа пула тата граждан вăрçинне пула юхăннă çĕршывра çак Хĕрлĕ Çара туса çитĕнтересси çăмăл пулман. Анчах халăх ху çара туса çитĕнтерес тесе нимĕне те шеллемесĕр тăрăшрĕ, çавăнпа вăл хăй никама пăхăнмасăр пурăнассине тата мирлĕ ĕçе çирĕм çул хушши сыхласа тăнă хăватлă вăй туса хучĕ. СССР пĕр-пĕтĕмĕшĕ çĕршыв, хăйне уйрăм çĕршыв пулассине сыхласа иртнĕ вăхăтри ăрусен пысăк йывăрлăхсем тӳсмелле килнĕ, çавна ССР Союзĕнчи халăхсем лайăх пĕлсе тăраççĕ тата нихăçан та манас çук. Германи интервенчĕсен тата ытти интервентсен те—пирĕн тăван çĕршывăн ӳтне туллана интервентсен çарĕсем мĕнле хуçаланнине вĕсем манман-ха.

Хĕрлĕ Çарăн геройла кĕрешĕвĕ, унăн хăватлă та никам çĕнтерейми вăйĕ ССР Союзĕнчи халăхсене мирлĕ ĕçпе пурăнма май парса тăчĕ. Шăпах çак вăй ĕнтĕ ССР Союзне вăрăм вăхăт хушши мирлĕ ĕçпе пурăнма май туса пачĕ. ССР Союзĕ çине тапăнассине пĕр хут кăна мар хатĕрленĕ империалистсен аллине Хĕрлĕ Çар тыта-тыта чарчĕ. Вăл 1939—40 çулсенче Финляндири белогвардеецсене отпор пачĕ, халĕ ĕнтĕ, белогвардейщинăна хăйĕн преступленниллĕ аллине çĕкленĕ тата Германири фашистсемпе пĕрле пулса мирлĕ совет çĕршывĕ çине вăрă-хурахла тапăннă чухне, çав белогвардейщинăна Хĕрлĕ Çар тĕпĕнех çĕмĕрсе тăкĕ. Хĕрлĕ Çар Хĕвеланăç Украинăри тата Хĕвеланăç Белоруссири, Бессарабири, Литвари, Латвири тата Эстонири халăхсене ирĕке кăларчĕ. Вăл пĕр хут кăна мар халиччен ниçта та пулман геронизмăн ырă тĕслĕхĕсене кăтартрĕ. «Тăван çĕршывăн, Сталинăн!» тесе хăватлăн кăшкăрса, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем совет власăшĕн, чыслăхшăн, ирĕклĕхшĕн çапăçусене кĕчĕç тата халĕ те кĕреççĕ. Хĕрлĕ Çарти массăллă героизма тăшмансем граждан вăрçи çулĕсенчен пуçласах лайăх пĕлеççĕ, çак массăллă героизм халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене çĕнĕ вăйпа хавхалантарса пырать, вĕсен хăватлă тапăнăвĕ пурне те çĕмĕрсе пăрахакан вăй пулмалла туса хурать.

Сталин юлташ яланах совет халăхĕн мобилизацилле хатĕрлĕхре тăмалла тесе вĕрентнĕ. Вăрçă пире кĕтмен çĕрген килсе çапаймарĕ. Совет чикки леш енче мĕн-мĕн пулса пынине эпир сивĕччĕн сăнаса тăтăмăр, ССР Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕ ĕнтĕ хăйĕн граждăнла тивĕçне пурнăçа кĕртĕ.

Эпир пĕлсех тăратпăр:

Тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр, эпир çĕнтеретпĕр!

СССР Верховный Совечĕн Сессийĕ 1941 çултн бюджета йышăнса, оборона ăслли ассигновани çирĕплетнĕ чухне, СССР оборона вăй-хăватне тĕреклетме çĕршыв çакăн чухлĕ укçа-тенкĕ пама пултарнишĕн пĕтĕм çĕршыв хĕпĕртесе савăнчĕ.

Совет Союзăн граждăнĕсем вĕсем совет государстване мĕн кирлипе пурăнпс те пулăшма хатĕр тăнине кăтартса пачĕç. Нумай пулмасть государство заемне илме çыpăнасси вĕçленсе çитрĕ, çавăн чухне совет халăхĕ государствăна унăн вăй-хăватне тĕреклетесĕре хĕрӳллĕ пулăшу пама хатĕрлине кăтартрĕ. Заема малтан кăларнă сумăран чылай ытларах сарнă. Хĕрлĕ Çар хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте нимĕнле нуша та ан тӳстĕр тесе ССР Союзĕнчи халăхсем малашне те мĕн кирлине пурне те тума хатĕр. Çавна пурнăçа кĕртме пур ĕçе те çăр валли кирлĕ пек туса пымалла: промышленноçа йĕркеллĕ ĕçлеттермелле, унăн мĕнпур вăйăсене, **уйрăмăнах обо-рона валли ĕçлекен промышленноçа** вăйăсене мобилизацилемелле; **вăр**вăхăтĕнче вăл пит пысăк вырăн йышăнса тăракан **транспорта** тĕрĕс йĕркеллĕ ĕçлеттермелле; **колхозсен уйхирĕсемпе совхозсенче стаханов**ĕçе хавассăн, организованно туса пымалла; **çĕршыври мĕнпур ученăйсене, инженерсен, техниксен, писательсен, искусство работникĕсен** çине тăрăшса ĕçлемелле; **шкулта** çине тăса тата çавăн пекех тăрăшса **вĕренмелле;** пĕтĕм халăхăн **çар ĕçне, санитар служби, хими тата сывлăшран тап**нассинчен сыхланассин минимумне **вĕренмелле; дисциплинăна** çирĕплĕн **пăхăнмалла;** ĕç тухăçлăхне ытларах **ӳстермелле; революцилле сыхлăха ӳстермелле; тăван çĕршывшăн харпăр хăйне шеллемесĕр кĕрешме хатĕр пулмалла.** Совет патриочĕн çĕнтерес ĕç вĕçĕ çапла.

Совет патриочĕшĕн Хĕрлĕ Çар тăрăшассинчен çӳлерехре тăрахать урăх нимĕн те çук тата пулма та пулраймасть. Хĕрлĕ Çар хăй совет патриотизмĕн тĕлĕнмелле чаплă пахалăхĕсене воспитани парса ӳстерет: кунта сопатриотизмĕ чи ĕçлĕн те чĕррĕн хĕрленет, кунта чăн-чăн советлă, революцилле, боевой дисциплина, хăюллăх, героизм, ĕçе час чухласа илесси, ватлăх, нимĕнрен те хăраманни, пĕрине пулăшма хатĕр тăни çитĕнӳрен, кунта тата пĕтĕçнĕ боевой коллектив, харпăрхăйне шеллеме кĕрешме хатĕр тăрасси туптанса тăрать. Мĕншĕн тесен вăл ĕçсыннисен интересĕсене сыхласа тăракан çăр. Вăл революцин вут-çулăмĕ, граждан вăрçинче пиçĕхсе пынă. Ушалăх умĕнчи авторитечĕ вĕçĕмсĕр çак, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар—халăх ӳчĕпе юнĕнчен çуралса тухнă çар. Çак çара тата унăн халăхпа тачă пăхăнса тăракан командирĕн составне çĕнĕрен çĕршыври пек юратни урăх ниçта çук. Совет промышленноçĕ çак Ĕç кучухнехи чи лайăх боевой техникăпа парса тăрать. Çак промышленноçăн çĕнтерӳ тума мĕн кирлине пурне те парĕ.

Анчах пирĕн пурин те пĕр çын пулса хамăра Хĕрлĕ Çарăн боецĕ тесе шутламалла. «Пирĕн пĕтĕм халăх нихăçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çар, çтата авиаци ыйтнисене пурнăçа кĕмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕн кашниех хăйне тата ытти çĕнĕ чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ дисциплинăллă, организациллĕ пулма, тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла» (Молотов юлташ радио тăрăх калани).

Европăри, Азири тата ытти çĕршывсенчи вунпаар халăхсен кун-çулĕпе истори тараши çинче вĕçсе пăхсан. Халĕ пуçланнă отечественнăй вăрçă мĕнле вĕçленессинчен ССР Союзĕ халăхсен пурнăçĕ малашне мĕнле пуласси кăна мар, ытти халăхсен пуçĕ мĕнле пуласси те килет. Историлле аслă ответлăха туйса, пирĕнтен кашни хăйĕн пĕтĕм вăйне, хăйĕн хăватне, йĕн пĕлĕвĕсене, кирлĕ пулсан хайĕн пурнăçне те тăшмана çĕнтерес ĕç вĕçĕпама тăрать. Эпир ССР Союзĕ халăхсен аслă семьине хамăран сăмах правительстви тавра, хамăран аслă мухтавлă большевиксен коммунистла партийĕ тавра, унăн ăслăран ăслă пуçĕ, совет правительствин пуçлă Сталин юлташ тавра мĕн чухлĕ чăрах пĕтĕçтерĕпĕр, тăшмана çавăн пекех пĕтĕçтерĕпĕр.

Ем. ЯРОСЛАВСКИЙ

(«ПРАВДА», 1941 ç. июнĕн 23-мĕш.)

Телейлĕ çĕршывшăн, Сталиншăн пурнăçа пама та хатĕр

КАНАШ. Анаткас Уçырма ялсоветĕнчи финагент Павел Николаев колхозниксемпе единоличник-хресченсем патне яланах ирхине тата каçхине çӳреме юратать.

— Кăнтăрла нумайĕшĕсем ĕçре пуласçĕ,—тет вăл,—каçхине е ирхине вĕсене тĕл пулса каласа, ăнлантарса пама пулать.

Павел Николаев финагент пулса ĕçлеме тытăннăранпа, çак пĕр çулталăк хушшинче, колхозниксемпе единоличник-хресченсем патĕнче темиçешер хут пулса, вĕсене нумай хыпарсем çинчен пĕлтернĕ, нумай ыйтусем çинчен ăнлантарса панă. Вăл колхозник е единоличник-хресчĕн патне пырсан мĕн çинчен тата мĕнле каласмаллине лайăх пĕлет. Единоличник хресченсене колхоза кĕрсе кайсен пурнăçне тĕпрен лайăхлатас çул çине тăма пулăшать. Кăçал вăл ĕçлекен ялсоветри единоличник-хресченсенчен 20 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Активпа тачă çыхăнса ĕçлени плана ăнăçлăн тултарма пулăшать. Вăл ял совет депутачĕсемпе, активистсемпе, колхоз председателĕсемпе канашлать, вĕсенчен пулăшу ыйтать, кирлĕ пулсан вĕсене те пулăшать. Чăн та, ăна колхоз председателĕ Львов, ялсовет депутачĕсем Борисов, Анисимова тата ытти юлташсем кулленех пулăшаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Анаткас Уçырма ялсоветĕ укçа-тенкĕ мобилизацилес **плана уйăхран** уйăхах, кварталтан-кварталах ирттерсе тултарать. Иккĕмĕш кварталти плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 191 процент тултарнă.

Июнь уйăхĕн пуçламĕшĕнче Совет Правительстви Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи «планăм) Заема кăларасси çинчен пĕлтернине пĕтĕм колхозниксем тулли кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Çак ĕçе тума пĕтĕм актив хутшăннă. Павел Николаев ун чухне заем уполномоченнăйĕ пулса ĕçленĕ. Çĕнĕ заема 9250 тенкĕлĕх сарнă. Заем укçине 3350 тенкĕ пухса хывнă.

Июнĕн 22-мĕшĕнче этемлĕх историйĕнче пулман тискерлĕх пуçланчĕ. Германи фашисчĕсем ĕмĕчĕсем пурнăçа нихăçан та кĕреймеççĕ. Пирĕн мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çар урнă фашистсене пĕр тĕпренчĕк юлмиччен арканса тăкĕ. Эпир, Совет ĕçсыннисем, хамăр тăван Хĕрлĕ Çара чĕререн юратса, ăна мĕнпур вăйпа пулăшатпăр. Эпĕ хамăн вырăнта хастарлăн ĕçлеме, заем укçине тата ытти тӳлевсене ăнăçлăн пухса пыма çирĕп сăмах паратăп. Тăвăлçă çĕршывшăн, Сталиншăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме пулатăп.

М. Т.

Эпĕ те Хĕрлĕ Çара каятăп

Манăн аслă пиччĕ — Алексей иртнĕ çулта 10-мĕш класран «отлично» палăсемпе вĕренсе тухрĕ. Халĕ вăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăван çĕршывăн чикки-сене сыхлать.

Эпĕ те кăçал Чкаловски районри Гури-Туçари вăтам шкултан «отлично» палăсемпе вĕренсе тухрăм. Шăллăмсем те вăтам шкулсенче вĕренеççĕ.

Хĕрлĕ Çар ретне тăрса тăван çĕршыва сыхлама тивĕçлĕ пулассишĕн хытă тăрăшрăм. Вĕреннĕ хушăрах 4 оборона значокĕ илтĕм, сывлăха çирĕплетсех пытăм.

Германин урăх фашисчĕсем пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине килсе тапăнчĕç. Çавăнпа та эпĕ вĕсене çапса аркатма мана Хĕрлĕ Çар ретне хăвăртрах илме ыйтатăп.

В. ЧЕРНОВ.

Уборкăна тимлĕн хатĕрленер

Çумкурăксене хирĕç кĕрешĕве

Пĕтĕм çĕршыври, çавнашкалах пирĕн еспубликăри колхозсем çумкурăксене тересситĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн уйрсенче çумкурăксем çулран-çулах халланса пыраççĕ. Çумкурăксене хиç малашне те вăйлăн кĕрешсе пыалла.

Çумкурăн вăррисем тăпра айĕнче нуй вăхăт хушши выртсан та тепĕр т шăтса тухма пултараççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ çумкурăксен вăррисене çитĕн памалла мар. Çумкурăксене тĕшкрă калчисем çинче кăна мар, вĕсене рĕç пур çĕрте те кĕрешмелле.

Халĕ колхозниксен килĕсем тавраĕнче, пахчасенче тĕрлĕрен çумкурăкм, сăмахран, хурхуххи, пиçен, тинек, армути, шăлтăрма курăк текен мкурăксем çитĕннине курма пулать. к çумкурăксен вăррисене çил урăх ре — уйхирсемпе çарансем çине вĕçрсе кайма пултарать.

Çумкурăксене тĕп тăвас тесен, пурăнакан çуртйĕрсем патĕнчи, пахчасенчи çумкурăксене тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа пĕтерес пулать.

Халĕ шкул ачисем каникулта. Вĕсен пушă вăхăтсем те пур. Шкул ачисем хăйсен килĕсем таврашĕнчи, пахчасенчи çумкурăксене пĕтерме пултараççĕ. Ачасем, çумкурăксене çумлас ĕç йывăр мар, çак ĕçе çине тăрса тытăнăр. Хуçалăх таврашĕнчи, çавнашкалах пахчасенчи çумкурăксене тĕп тунипе эсир колхоза пысăк усă паратăр. Кунсăр пуçне сирĕн килсем, пахчасем культурăллă пулаççĕ.

Ачасем, çумкурăксене хирĕç кĕрешĕве тухăр!

А. ПЛЕТНЕВА.

Краеведени музейĕн научнăй сотрудникĕ.

Калчасене таса тытас пулать

Çумкурăксене хирĕç кĕрешни — йлă тырпулшăн кĕрешни. Çакна Вăрр районĕнчи колхозсем лайăх ăнланилнĕ, вĕсем çумкурăксемпе кĕрешес хастаррăн тытăнчĕç. Нумай колсем кĕрхи тулăпа клевер çинчи мкурăксене çумласа пĕтереççĕ. Июн 20-мĕшне Арапуçĕнчи «Арабось» хоз 80 гектар кĕрхи тулăна, Орнар- «Победитель» колхоз 90 гектар клее, 10 гектар кĕрхи тулăна, Çĕнĕ ренерти «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз 42 тар клевере, Чулкасри «Свобода» хоз 35 гектар кĕрхи тулăна, Патири «Заря» колхоз 38 гектар кĕрхи тулăпа клевере, Çистепери «Красная звезда» колхоз 15 гектар кĕрхи тулăна çумкурăксенчен тасатнă. Кив Мăнтăрпа Çитмĕш колхозĕсем те ку ĕçе хĕрÿллĕн пуçăнчĕç.

Анчах хăшпĕр колхозсем çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе кирлĕ пек хаклаççĕ. Кĕлкеçри тата Анаткасри колхозсем халĕ те çум çумлама тытăнман.

Çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе хакламанни пулмалла мар, вĕсемпе çине тăрса кĕрешмелле.

В. ТУРТУШ.

Тырпулсене пухса кĕрес умĕн

СТĔРНЕ. Кăташирi «Пионер» колхоз отрисене кĕске срокра тата пысăк халăхпа акса хăварчĕ. Тип-тикĕс тса тухнă калчасем кăçал иртнĕ хинчен те вăйлă тырпул туса илесе шантараççĕ. Çуракине вĕçленĕ çăнах, колхоз уйри тырпулсене ка кĕме хатĕрленес ĕçе тытăнчĕ. лхоз тимĕрçисем Г. Николаевпа Федоров комсомолецсем икĕ жнейпилĕк веялка, тепĕр триер юсанă. потилкăсене юсама тытăннă. Машиемпе ĕçлеме А. Петров, А. Краснов хозниксене уйăрнă. Урапасене, лакĕÿлмелли хатĕрсене юсасах тăраçчалла хĕрарăмсене ĕçе явăçтарас па 80 ача валли яслĕ уçаççĕ, унта ĕçлеме çынсем уйăрнă. Яслĕ валли апат-çимĕç продукчĕсене кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ.

Колхозри бригадăсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Стена хаçачĕсем бригадăсем уйри тырпула пухса кĕме мĕнле хатĕрленнине сутатса тăраççĕ. Агитаторсем ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановлени тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VII пленумĕн решенийĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Çум çумлаççĕ

КТЯБРЬСКОЕ. Калинин ячĕпе тăн колхозри бригадăсем тата звем уйхирсенче çумкурăксене пĕтетĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Звенохăйсене çирĕплетсе панă участок çумкурăксенчен таса тытса тăраç. Клевер, кĕрхи тулă участокĕсенчи курăксене çумланă.

олотов ячĕпе тăракан тата «Комолец» колхозсенче те тырă акнă, на-çимĕçсем лартнă участоксене тарытса тăраççĕ. Шăтса тухакан çумăксене сийĕнчех çумласа тĕп тăĕ.

Ф. ДАНИЛОВ.

Артель членĕсен канăвĕ

СĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Ширшов ячĕпе тăракан артель членĕсем кашни çулах канмалли çуртсенче, санаторисемпе курортсенче тата инçетри экскурсисенче пулаççĕ.

Кăçал канмалли çуртсенче 2 çын, санаторисенче 2 çын каннă, халĕ иккĕн инçетри курортсенче канаççĕ. Артель членĕсен 5 ачине ачасен республикăри санаторине тата пионерсен лагерьне яраççĕ.



Осоавиахимăн Мускав область совечĕн планернăй клубĕ боецпланеристсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Курсантсем трактороспартран планерпа вĕçме тата самолет хыççăн буксирпа пыма вĕреннĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: планернăй клубăн курсанчĕсем аэродромра.

Н. КУБЕЕВ фото-ÿкерчĕкĕ. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

С. М. Андреев юлташа Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен

Сергей Михайлович **Андреев** юлташа Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн—
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ А. КРАСНОВ.

Шупашкар хули, 1941 çулти июнĕн 25-мĕш.

Артель ĕçĕ лайăхланчĕ

Абакассинчи (Çĕрпÿ р.) Громов ячĕпе тăракан промартель кăçал хăйĕн ĕçне нумай аванлатрĕ.

Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени хыççăн артель хăйĕн производствине анлăн сарса пыма пуçларĕ. Çĕнĕ производствăсем организацилесе колхозниксене тĕрлĕ япаласем: мучаларан явнă вĕрен 262 штука, çуна турти пăявĕ 206 мăшăр, 154 çуна, 148 урапа кустăрми, 7 подсанка, 61 сÿре т. ыт. япаласем туса пачĕ.

Артель хăйĕн планне уйăхран уйăха тултарса пырать, продукци туса кăларассине ÿстерет. Кăçалхи çул 5 уйăх хушшинче çулталăк планне 77 процент, уйрăмăн май уйăхĕнчи плана 148 процент тултарчĕ. Артелĕн накопленийĕ те план тăрăх палăртнинчен чылай пысăк. Артель çултан çулах ÿссе пырать. Артель членĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Плана мĕнле тултарса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Ĕçе тĕрĕс организацилеççĕ. Кунта производствăллă бригадăсем таваттă. Вĕсем те пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Пĕрремĕш бригада виççĕмĕш бригадăпа ăмăртать. Н. Борисов артель заданине 152 процент, А. Долгова 204, И. Митрофанова 161 процент тултараççĕ.

Н. ЯШКОВ.

Тасалăхпа культурлăхшăн

Учрежденисен пурăнмалли çурт-йĕрĕсене хулари жилуправлени аллине памалла туни пурăнакансен ответлăхне пысăклатрĕ. Шупашкарти Дзержинский урамĕнчи 22 номерлĕ çуртра пурăнакансем хваттерсенче тата килхушшинче тасалăхпа культурлăхшăн кĕрешме тытăнчĕç. Çурт коменданчĕ Григорьев юлташ пуçарнипе ытти пурăнакансем те килхушшинчи тасамарлăха пĕтĕмпех хырса, шăлса тасатнă, хваттер стенисене хутпа сыпăçтарса шуратнă. Килхушшинче пĕчĕк ачасем валли выляма хăйăр сапса ятарласа площадка тунă.

Хулари жилуправлени те коммуналлă çуртсенчи тасалăха асăрхасас тăма пуçларĕ.

В. СОКОЛОВ.

Хăмла плантацийĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Янмурзино» колхоз кăçал 5 пин хăмла аври лартса плантаци турĕ. Хăмла аврисем аван çитĕнеççĕ.

И. ЕГОРОВ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 25-мĕшĕнче каларнă Указпа Николай Иванович **Барсков** юлташа Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Шкула пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Тĕрер ялсоветĕнчи колхозсенче Новосибирски облаçĕнчи Черепаново районĕнчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци чĕнсе каланă çырăва тата çав çыру çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ июнĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлението колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явăрĕç. Ку чĕнĕве «Труд», «Правда», «Красная Чувашия», «Пчелкино», «Буйка» тата «Калиновка» колхоз членĕсем ырларĕç. Вĕсем ялсовет территоринчи шкулсене 1941—1942 çулти вĕренÿ çулне хатĕрленме пулăшма пулчĕç. Шкулсем валли вутă турттарма, кăмакасем юсама тата ытти вак-тĕвек ĕçсене тума пулнă. Кунсăр пуçне колхозниксен вăйăпе 3 класлă шкул çурчĕ тума йышăннă.

Халĕ колхозниксем практикăллă ĕçе тытăнчĕç те ĕнтĕ. Иккĕмĕш Тĕрер ялĕнче туллимар вăтам шкулăн 5—6—7 классен çуртне тума тытăннă. 20 çын вăрманта йывăç касаççĕ.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Тăрăшса вĕренеççĕ, тăрăшса ĕçлеççĕ

СĔНТĔР. Хăйсен политикăллă пĕлÿне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлекен комсомолецсем производствăра та примерлă ĕçлеççĕ. Орехов юлташ нумай пулмасть комсомолăн пуçламăш организацин секретарĕ пулса ĕçлерĕ. Вăл комсомол организацине те лайăх ертсе пычĕ, хăйĕн политикăллă пĕлÿне ÿстерессишĕн те тăрăшса ĕçлерĕ. 1941 çулта Орехов юлташа сÿс-кантăр хатĕрлекен конторăна ĕçлеме хуçарчĕç. Орехов юлташ кунта та тăрăшса ĕçлет, плана вăхăтра тултарчĕ, преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Сĕнтĕр-больницинче комсомол организаци секретарĕ пулнă В. Петров юлташ халĕ районри сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл çак çĕнĕ ĕçре те хăйĕн пултарулăхне кăтартать.

Машинно-тракторнăй станцинчи комсомолецсем А. Кабуркина, Д. Поликарпов, А. Налимов юлташсем производствăра та тăрăшса ĕçлеççĕ, хăйсен политикăллă пĕлÿне те ÿстерсех пыраççĕ.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Кашни кунхи учетшăн

çалхи çураки вăхăтĕнче çанталăк звийĕсем лайăхах мар пулчĕç пулте, колхозниксем, Пĕтĕм Союзри I партконференци решенийĕсемпе ялхуçалăх культурисен тухăçе тата выльăх-чĕрлĕх продуктиве ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçхушса тÿлесси çинчен ССР Союз Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă ановление хавхаланса, çураки ĕçĕпысăк ăнăçлăхпа вĕçлесе, ĕç тухăнăн паха тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. шер колхозсем тĕштирă культуне 5—6 кун хушшинче акса пĕçç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕраракан орденлă колхоз мĕнпур ырăсене сеялкăпа 5 кунра акса нĕ. Вăрмар районĕнчи «Арапуç» з 571 гектар çинчи тĕштирă культне 5,5 кунра акнă. Пиншер колниксем тата çĕршер трактористсем ки ĕçĕнче ĕçĕн пысăк тухăçлăхне трĕç. Сеялкăпа акакансем хăйсен ормисене ытлашшипех тултарса рĕç. Шăмăршă районĕнчи Сталин е тăракан колхозри Синелев юл- 11 ретлĕ сеялкăпа кунне 13—13,5 р акнă, Тямушев 13 ретлĕ сеял- 15 гектар тараннчен акса пынă. брьски районĕнчи «Волга» кол- Рядин юлташ, «Память Ильича» зри Трофимов тата Антонов юлм 11 ретлĕ сеялкăпа 12—13-шер р акнă.

калакансем те ĕçĕн пысăк тухăç кăтартса ĕçлерĕç. Икĕ касăллă на кунне иккшер гектар тата ыт та сухаланă плугарьсене те, сене икĕ хут тултарса ĕçленĕ ĕçсене те сахал мар кăтартса пулать.

ахи вăхăтĕнче «Чăваш Коммуни» «Красная Чувашия» хаçатсенчи бликăри Хисеп хăми çине 37 за, пĕр МТС-а, 12 тракториста колхоз производствинче малта кансене 85 çынна кĕртнĕ. Сура(Элĕк р.) 15 сысна аминчен 4,5 уйăхра 142 çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те сыхласа хăварнă. Çак колхозри свинарка П. Сергеева юлташ 5 амаран 52 çăвăр илнĕ, çулталăк вĕçленнĕ тĕло вăл çав амасенчен татах 70 çăвăр илме ĕмĕтленет. Планран иртерсе тултарнă ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх Сергеева юлташ 12 çăвăр илме пултарнă. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли постановление пурнăçа кĕртессине ăста тĕрĕс туса пыраççĕ, çак постановлени çинчен колхозниксене лайăх ăнлантарнă тата ĕçе учета илессине тĕрĕс йĕркеленĕ çĕрте результатсем те лайăх. Анчах та калас пулать, çак пысăк пĕлтерĕшлĕ постановление пурнăçа кĕртессинче çитменлĕхсем те пур-ха.

Звеносем организацилес тĕлĕшпе хăшпĕр районсенче ĕçе пăтраштарса янă. «Красный Октябрь» колхозра (Комсомольски р) бригадăсене икĕ звенона уйăрнă, кашни звенора 22—23 çын. Пуçламăш парторганизацин секретарĕ Козлова юлташ ертсе пыракан звено çумне 12 гектар тулă, 8 гектар сĕлĕ, 3 гектар урпа, 3 гектар вир, 2,5 гектар çĕрулми, 0,5 гектар кишĕр тата пĕр гектар кок-сагыз — пурĕ 9 тĕрлĕ культура çирĕплетнĕ. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановленире — тĕштирă культурисем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звено çумне 3—5 тĕрлĕ культура çеç çирĕплетмелле, тенĕ.

«Майăн 1-мĕш» колхозра (Сĕнтĕр р.) кашни звено çумне 7-шер культура çирĕплетнĕ. Кувакино районĕнче звеносем çумне колхозсенче акакан мĕнпур культурăсене çирĕплетсе панă.

Ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлението пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен кăçалхи апрелĕн 20-мĕшĕнче йышăннă решенире ВКП(б) Чăваш Обкомĕ парти райкомĕсене тата райсоветсен исполкомĕсене — бригадăсем, звеносем тата выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи уйрăм работниксем патне планлă заданине çитерессине колхозсем формальнă тунине асăрхаттарчĕ. Обком, çак ĕçре оперативлă ертсе пыма тата колхозсенче планировани ĕçне тĕрĕс туса пыма хушрĕ. Анчах Обкомăн çак решенине хăшпĕр районсем кирлĕ пек ăнланса илмен.

Сĕнтĕр районĕнчи «Заря» колхозри доярккасене кашни ĕнерен, район заданийĕ тăрăх 1050 литр сĕт суса илес ырăнне, 1305 литр сумалла тесе задани панă. «Хĕрлĕ Сормово» колхозра район заданийĕ тăрăх çĕрулми тухăçĕ 150 центнер пулмалла чухне, бригадăсене панă заданинче 130 центнер кăтартнă.

Кун пек çитменлĕхсем Сĕнтĕр районĕнче çеç мар пур. Заданисене парас ĕçе питĕ начар йĕркеленĕ. Бригадăсемпе звеносене паракан заданисене пĕчĕк хут татки çине çеç сырнă, вĕсем çине никам та алă пусман. Вăльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксене планлă заданине зоотехниксем алă пуснипе панă пулнă. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕн тата выльăх-тĕрлĕх продуктивлăхĕн заданисене бригадăсемпе звеносем патне тата уйрăм работниксем патне çакăн пек йĕркепе çитерни — работниксене лайăх ĕçлеме мобилизилемест. Планлă заданисене фермăсенче, колхозсен правленисенче курăнмалла çакса хумалла, тесе кăтартса панăччĕ, анчах çакна халĕ нумай колхозсенче тумаççĕ.

Ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртесси планлă заданисене çитернипех пĕтмест, вăл пуçланать çеç. Апла пулин те, хăшпĕр районсенчи тата колхозсенчи работниксем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн заданийĕсене çитернĕ хыççăнах лăпланса ларнă. Тĕр ĕç—заданисем панă хыççăн çеç пуçланать. Вăл ĕç—заданине тултарассине организацилесси, ĕçе, продукцине тĕрĕс учета илсе пырса, ĕçĕн результачĕсене кăтартасси. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем учет ĕçĕн пĕлтерĕшне хаклаççĕ. Калас пулать, ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановление пурнăçа тĕрĕс кĕртес ĕçре тĕп выränта тăраканĕ — учет пулмалла. Учет çук пулсан — ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

Сĕнтĕр районĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхозра кашни доярка мĕн чухлĕ сĕт сунине кулленех учета илмеççĕ, мĕнпур доярккасем сунă сĕте пĕрле виçеççĕ; кашни доярка мĕнчухлĕ сĕт сунине виççе тĕрĕслемеççĕ. Çакăн пек йĕркесĕрлĕх пур чухне, кашни доярка ĕçĕн результачĕсене пĕлме çук. Çамрăк выльăхсен чĕрĕ виçи мĕнле хутшăнса пынине виççе тĕрĕслемеççĕ. Хăшпĕр фермăсенче сĕт сумалли çулталăкри заданинне ÿйăхсем çине ÿйăрман. Çакăн хыççăн ĕнтĕ, уйăх е квартал заданийĕсем мĕнле тулса пынине ăçтан пĕлмелле?

Уйхирти ĕççене учета илес тĕлĕшпе те çитменлĕхсем пур: «Хĕрлĕ Сормово» колхозри счетовод колхозниксен ĕçкунĕсене, хăçан тата мĕнле культура çинче ĕçленине кăтартмасăр çырать.

Ĕçкунне учета илессине пур çĕрте те пĕр евĕрлĕ тумалла. Колхозăн шалти йĕркелĕхĕн правилисем пулмалла, ĕçе учета илессинĕ çав йĕркелĕхе пăхăнса туса пымалла. Колхозник çав правилăна пăсса ĕçе 30 минутăран ытла кая юлса тухнă пулсан — ăна ¾ ĕçкунĕ çырмалла. Кăнтăрла иртсен ĕçе тухнă пулсан — ½ ĕçкунĕ çырмалла. Çакăн пек йĕрке çынсене дисциплинăллă тăвă, колхозри ĕçсен йĕркисене тĕрĕс пынăçласа пыма вĕрентĕ. Çакăнпа пĕрлех учетра: хăçан тата мĕнле ĕçре ĕçлени, мĕнле культурăпа ĕçленни палăрмалла. Çакăн чухне çеç уйрăм культурăсем тăрăх ĕç результачĕсене пĕлме пулать.

Фермăсенче çавăн пек тумалла: уйăх пĕтнĕ хыççăн, виçĕ кун хушшинче кашни работникăн ĕç итогĕсене тÿл